ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июнь
2
ытларикун
№ 106 (9015)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
СССР орденĕсемпе медалĕсене пани (1 стр.).
Республика уй-хирĕсенче (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: А. Андреев.—Вĕреннине практикăла ĕçпе çыхăнтармалла (2 стр.).
СТЕНА ХĂÇАЧĔСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ: Строительствăна хăварт, йÿнĕ, лайăх тăвассишĕн кĕрешмелле (2 стр.).
Е. Афанасьев. — Çул тăвакан механизаторсем (2 стр.).
ЮРА ПРАÇНИКĔ УМЕН: Пире Сталин ырлăх панă (3 стр.).
С. Николаев.—Ачасен канăвне лайăх организацилер (3 стр.).
А. Митрофанова.—Выльăх-чĕрлĕхе кĕтÿре çÿретмесĕр пăхса усрасси (3 стр.).
АГРОНОМ КАНАШĔ: С. Григорьев.—Вир акса тăвасси (3 стр.).
Чехословакире карточкăсен системине пăрахăça кăларнă тата укçа-тенкĕ реформине ирттернĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Баскетбол енĕпе Европăра мала тухмалли ăмăрту (4 стр.).

Утă çулма, силос хывма тĕплĕн хатĕрленмелле

Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçĕн ответлă тапхăрĕ çывхарса килет. Улăх-çарансенчи, пусă саврăнăшĕсенчи, вăрмансенчи курăксене тухăçлă ÿстересе вăхăтра лайăх пуçтарса кĕресси — колхозсемпе МТС-сем тата ялхуçалăх органĕсем умĕнче тăракан паянхи пысăк задача.

Юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх валли утă хатĕрлес ĕç республикăра тăтăшах юлса пычĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли паха утă кирлĕ таран хатĕрлес задачăна нумай колхозсенче çулсеренех пурнăçламан. Çакă вăл колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем улăх-çарансен тухăçлăхне хапартас тĕлĕшпе тумалли агротехникăлла ĕçсене хаклаймасăр пирки, çав ĕçсене кая юлса, çиелтен кăна тунă е пачах тумасăр хăварнă пирки пулса пырать.

Нумай колхозсен çаранĕсем япăхса кайнă. Вĕсене е вĕтĕлх вăрман пусса илнĕ, е, питтĕе тăман пирки, шурлăх пулса кайнă. Çавна май унта выльăх апатне юрăхлă курăксем сахалланнă, вĕсен вырăнне хăях йышши курăксем тата выльăх юратса çимен е пачах çимен ытти курăксем ÿсме тытăннă. Çарансене çĕнетсе пырас, курăксене удобренисем сапса парас тата çарансене сухалаcа çĕнетес ĕçе нумай колхозсем пĕчĕк вырăнсенче кăна туса ирттереççĕ. Кăçал та çарах курăксене удобренисем сапса парас ĕçе хăшпĕр колхозсем кăна пурнăçларĕç. Машина-трактор станцийĕсем колхозсен улăх-çаранĕсем çинче тумалли ĕçсене кая хăварчĕç, машинăсемпе туллин усă курма тăрăшмарĕç.

Улăх-çарансем çинче тумалли ĕçсене хакламан колхозсенче, паллах ĕнтĕ, çаран утин тухăçлăхĕ ÿссе пымасть, вĕсем выльăх-чĕрлĕх валли утă çителĕклĕ хатĕрлеймеççĕ. Çавна пула вĕсем общество выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçре сутăн-çул юлса пыраççĕ. Утă туса илес ĕçе хакламанни продуктивлă выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ÿстерме чăрать.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствипе унăн вырăнти органĕсем тата район Совечĕсен исполкомĕсем те выльăх-чĕрлĕх валли утă çителĕклĕ хатĕрлес задачăна татса пама колхозсене çителĕксĕр пулăшмаç. Улăх-çарансен тухăçлăхне хапартас ĕçе пур колхозсенче те туман, курăксен акнă çĕр лаптăкне ÿстерес, тухăçлăхне хапартас ĕçе организациленĕ колхозсенче çителĕксĕр пулчĕ.

Ялхуçалăх министерствипе унăн вырăнти органĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсен выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе колхозсене лайăхрах ертсе пымалла тата пулăшмалла.

Кăçал эпир хăмăрна кÿршĕллĕ республикăсемпе — Мордва тата Мари республикисемпе социализмла ăмăртăва тухса, общество выльăх-чĕрлĕхĕ валли пур колхозсенче те апат çителĕклĕ хатĕрлеме сăмах панă. Республикăри нумай колхозсем çуракинче хăйсен обязательствисене чысăн пурнăçларĕç, выльăх-чĕрлĕх валли нумай çул ÿсекен курăксем, тымарçимĕçсем, силос культурисем, пĕр çул ÿсекен курăксем планран ирттерсе акса хăварчĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, республика кăçал çураки планне нумай çул ÿсекен курăксем енĕпе — 107,3 процент, силос культурисем енĕпе—103,8 процент, тымарçимĕçсем енĕпе—97,3 процент, пĕр çул ÿсекен курăксем енĕпе 101 процент тултарчĕ.

Колхозсемпе МТС-сен ответлă задачи акнă тырпула выльăх апачĕлĕх культурăсене пысăк тухăçлă ÿстересси пулать. Кăçал нумай çул ÿсекен курăк ути кашни гектартан вăтам шутпа 30 центнертан кая мар, çаран ути—22 центнертан кая мар, выльăх кăшманĕ—300 центнертан кая мар, силос масси—250 центнертан кая мар пухса кĕртмелле. Тырă вырма тухиччен кашни колхозăн çарансемпе вăрмансенчи курăксене тата уй-хирти пусă саврăнăшĕсенче утăлăх акнă курăксене çулса пухмалла, силослăх акнă культурăсене тата мĕнпур çырма-çатрасенчи курăка пухса кĕртсе силос тумалла.

Умра тăракан задачăсем ответлă та пысăк. Партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем утă çулса пухас, силос хывас ĕçсене республикăра пур колхозсенче те пысăк пултаруллăхпа çирĕп организацилесе ирттерме тивĕçлĕ.

Нумай колхозсемпе МТС-сен руководителĕсем утă çулса пухас тата силос хывас ĕçе кăçал та кая хăварас шухăшпа пурăнаççĕ. Çакă вăл колхозсен çаранĕсем çинче тумалли ĕçсене кая хăварна пынинчен, çарансем çинче халĕ те кĕтÿ кĕтме чарманнинчен курăнать. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен çавăн пек руководительсене вăхăтра асăрхаттарни кирлĕ. Çакăнпа пĕрлех колхозсемпе МТС-сен утă çулма тата силос хывма хатĕрленес ĕçре те юлса пыраççĕ. Утă çулмалли машинăсене юсаса пĕтермен-ха. Нумай колхозсем çак ответлă ĕçе йĕркеллĕ ирттерме ĕç планĕсем туса хатĕрлемен.

Ялхуçалăх министерствин, район Совечĕсен исполкомĕсемпе МТС директорĕсен колхозсен улăх-çаранĕсемпе уй-хирĕсенче, государство çĕрĕсемпе вăрмансенче утă çулма хатĕрлеме çĕр уйăрса памалла. Курăксене çулса пухас тата силос хывас ĕçе 15—20 ĕç кунĕнче туса ирттермелле тăвас пулать. Утă хатĕрлес ĕçе тырă вырма тухиччен пĕтĕмпех вĕçлемелле.

Утă çулмалли машинăсене çывăх кунсенчех юсаса çитермелле. Лашапа ĕçлемелли кашни машинăпа тулли усă курма талăкне 4 гектартан кая мар утă çулмалла тăвас пулать. Трактор косилкисемпе куллен 20-шер гектартан кая мар утă çулмалла.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен тата МТС директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен утă çулса пухнă вăхăтра колхозниксемпе механизаторсен социализмла ăмăртăвне анлăн организацилесе ертсе пымалла. Малта пыракан колхозниксемпе механизаторсен паха опытне куллен сарса пымалла тăвас пулать. Çакăнпа пĕрлех утă çулса пухакан колхозниксемпе механизаторсене правительство лайăх условисем туса пани çинчен массăна тĕплĕн ăнлантарса пани кирлĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕ çапла тума хушать: утă çулса пухас ĕçе хутшăннă колхозниксемпе колхозницăсене тата МТС работникĕсене, ĕçкунĕсен шутласа панисĕр пуçне, çулса пухса кĕртнĕ утăн 10 процентне уйăрса памалла; çавăн пекех утă çулса пухас ĕçе хутшăннă ытти ĕçхиннисене те пухса кĕртнĕ утăн 10 процентне уйăрса памалла.

Утă çулмалли, пуçтармалли тата капана хывмалли задание кĕске срокра пĕтерсе пурнăçлакан тракторисчĕсемпе прицепщиксен, вĕсем хăйсен ĕçне лайăх тунă пулсан, пурне те панă чухлĕ ĕçкунĕсен илнисĕр пуçне, çав ĕçре тунă ĕçкунĕсен 40 процентне хушса илме тивĕçлĕ пулаççĕ.

Утă ытларах тума республикăри колхозсенче нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли çĕр лаптăкĕ малашнехи çулсенче те ÿссе пымалла. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕх апачĕн çирĕп никĕсĕ пулса тăрать. Пусă çаврăнăшĕсенче акма курăк вăррисем кирлĕ чухлĕ хатĕрлес тесе, кăçал кашни колхозрах вăрлăхлăх хăварнă курăксене пысăк пахалăхпа пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленмелле.

Партипе правительство колхозсенче курăк вăррисем акса тăвас ĕçе пысăк хурçа хаклаççĕ. Çак ĕçпе колхозсем интересленине малалла çĕклесе пырас тĕлĕшпе колхозсене клевер, люцерна тата тимофеевка курăкĕсен вăррисене государствăна планран ирттерсе панăшăн премии хушса памалла тунă. Нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăх участокĕсене уйăрса хăварас ĕçе тĕплĕн тумалла. Вăрлăх участокĕсенчи курăксене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурне те туса ирттермелле.

Социализмла ăмăртăва туха илнĕ обязательствăсене пурнăçлама колхозниксен тата механизаторсен пĕтĕм вăйне мобилизацилер. Утă çулса пухас, силос хывас ĕçсене кĕске срокра, пысăк пахалăхпа туса ирттерер.

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

Çак кунсенче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕн заместителĕ Д. Я. Митьков юлташ, СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ячĕпе, наградăна илме тивĕçлĕ пулнă çынсене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пачĕ.

Сутĕç, сывлăха сыхлас тата финанспа кредит системинче ĕçлекен работниксем нумай çул лайăх ĕçленĕшĕн наградăсем илнĕ. Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкул учительницине А. И. Андеева Ленин орденĕ панă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тукташăмри çичĕ çул вĕренмелли шкул учительнине Е. Е. Гурьянова «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ. Советски районĕнчи Килтерми çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ П. Н. Орлов, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи больницăри медицина сестри А. Б. Андронова, Госбанкăн Хĕрлĕ Чутайри уйрăмĕн управляющийĕ А. Р. Куличев «Ĕçпе палăрнăшăн» медаль илнĕ.

Çавăн пекех заводра ĕçлекен В. А. Авдеев, Н. А. Меглицкий, А. А. Мазур, А. С. Кубри тата М. П. Пелевин юлташсене орденсемпе медальсем панă.

Наградă илнĕ юлташсене Д. Я. Митьков юлташ саламласа малашнехи ĕçре çĕнтерÿсем туса пыма ыра сунчĕ.

Тăван çĕршывра

Чукоткăри шкулсенче

АНАДЫРЬ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çул çуркунне Канчалан юханышывĕн айлăмне пăлансем кÿлнĕ 500 лав пырса çитнĕ. Çак вырăна «Заря» ялхуçалăх артелĕ хăй вырнаçма суйласа илнĕ. Çыран хĕррине строительство ĕçĕсем пуçланнă. Çĕнĕ колхоз ялĕнче чи малтан пысăк шкул туса лартнă. Часах учительсем те килсе çитнĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пăлан ĕрчетекенсемпе сунарçăсен ачисем вĕренме тытăннă.

Октябрьти Социализмла Аслă революциччен Чукоткăра пурĕ те пĕр шкул кăна пулнă. Унта купецсемпе патша чиновникĕсен ачисем кăна вĕреннĕ. Халĕ округра вăтам, çичĕ çул вĕренмелли тата пуçламăш шкулсем 68 шутланаççĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте вĕренеççĕ. 32 шкул çумĕнче интернат уçнă. Вĕсенче чукча, эскимос, ламут, чуван ачисем 1.200 çын государство шучĕпе пурăнаççĕ. Кашни интерната библиотека, музыка инструменчĕсем, вылямалли япаласем пур. Çулла ачасем пионер лагерĕсене тухса каяççĕ. Лагерьсем Чукоткăри чи илемлĕ вырăнсене вырнаçнă.

Чукоткăри вырăнти Советсем халăха вĕрентес ĕç валли çуллен миллионшар тенкĕ укçа расходлаççĕ.

Çĕнĕ çимĕçсенчен тунă консервсем

Консерв заводĕсем кăçал пиçсе çитнĕ пахча çимĕçсемпе улма-çырласенчен консервсем хатĕрлеме тытăннă.

Компот туса хатĕрлесси кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 31 процент, шăпăнтă пахча çимĕçсемпе улма-çырла хатĕрлесси—66 процент, улма-çырла сĕткенĕпе томат сĕткенĕ туса хатĕрлесси—пĕр хут çура ăхăн, пахча çимĕçрен апатсем хатĕрлесси—42 процент ÿсет. Çавăн пекех маринованнăй тата консервированнăй хăяр хатĕрлесси чылай ÿсет.

Кутаисири консерв заводĕ çимĕç пăрса консервĕ туса кăларма тытăннă. Херсонри Сталин ячĕпе тăракан завод, Адыгей консерв комбиначĕ, Симферопольри «Трудовой октябрь» завод, Черкас заводĕ шпинатран консерв тума, Ереванри тата Ордубадри заводсем розăран варени хатĕрлеме тытăннă. Çитес çывăх кунсенче Совет Союзĕнчи чи пысăк консерв комбиначĕ—Краснодар крайĕнчи Крымская станицинчи Микоян ячĕпе тăракан комбинатра çимĕç пăрçаран консерв тума тата çĕр çырли шăнтса хатĕрлеме тытăнаççĕ.



Ленинград. Аничков кĕперĕпе Невски проспект.
П. ФЕДОТОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан канал ĕçе кĕнĕренпе пĕр çул çитрĕ

Майăн 31-мĕшĕнче Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан канал вырăссен аслă юханшывĕсене — Атăлпа Дона пĕрлештернĕренпе пĕр çул çитрĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсем нумай ĕмĕрсем хушши ĕмĕтленсе пурăнни пурнăçа кĕчĕ: Мускав пилĕк тинĕс порчĕ пулса тăчĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан канал çинче малта пыракан совет техникин мĕнпур çĕнĕ çитĕнĕвĕсенне усă курма пуçлаççĕ. Кунта телемеханика тата автоматика пулăшнипе пăрахутсене шлюзсем витĕр кăлараççĕ, насус станцийĕсем ĕçлесе тăраççĕ. Атăлпа Дон хушшинчи шыв çулĕ çинчи портсемпе причалсене çĕнĕ механизмсемпе тулăнтнă. Хăватлă та чаплă суднăсем туса хунă. Вĕсем пысăк шывсем çинче те çÿреме пултараççĕ.

Хальхи вăхăтра Атăлпа Дон хушшинчи канал çинче иккĕмĕш навигаци пырать. Канал çинче, Цимлянски тинĕсре кунĕн-çĕрĕн пăрахутсемпе теплоходсем кăшкăртни илтĕнсе тăрать. Атăл çинчен Дон тăрăхне, Дон çинчен Атăл тăрăхне халăх хуçалăхне кирлĕ таварсем вĕçĕ-хĕррисĕр пырса тăраççĕ. Пассажирсем илемлĕ пăрахутсем çинче ларса çÿреççĕ.

Атăлпа Дон пароходствинче ĕçлекенсем кăçалхи навигаци планне Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Нефтяниксен ачисем валли

БАКУ. (ТАСС). Апшерон çуртравĕн çурçĕр енчи пайĕнче, виноградниксемпе садсем хушшинче, пионерсен валли вунă шар лагерь усаççĕ. Нефть промыслисемпе заводсенче ĕçлекенсен ачисем—15 пин ача çулла тинĕс хĕрринче канаççĕ. Ача сачĕсем те дачăсене каяççĕ.

Çуллахи вăхăтра хулара юлакан ачасем валли пионер лагерĕсем 50 тата çуллахи площадкăсем 200 ăхăн тунă.

Дубаннăй тата «Восьмой километр» ятлă çĕнĕ рабочи поселокĕсенче икĕ шкул çурчĕ туса пĕтернĕ. Тата икĕ шкул туса пĕтереççĕ.

Нефтяниксен культура дворецĕсенче ачасем валли интереслĕ, усăллă япаласем нумай. Сталински районти культура дворецĕсене темиçе çул ĕнтĕ музыка шкулĕ, хореографи кружокĕ тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ. Шаумян ячĕпе тăракан культура дворецĕнче çамрăк художниксен студийĕ пур.

Нефтяниксен ачисем валли кăçал пионер çурчĕсем 4, ача сачĕсемпе яслисем, спорт шкулĕсем уçнă.

Учительсем заочно вĕренеççĕ

РСФСР Сутĕç министерствине кĕрекен педагогика институчĕсемпе учительсен институтсем çумĕнчи заочнăй отделенисене пуçламăш шкулсенче ĕçлекен 174 пин учитель вĕренет.

Россия Федерацийĕнчи шкулсен кĕçĕн класĕсене вĕрену çулĕ вĕçленчĕ. Хальхи вăхăтра хăйсен пĕлĕвне заочно вĕренсе ÿстерекен учительсем валли консультацисемпе обзорлă лекцисем организациленĕ. Июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 5-мĕшĕ çитиччен Мускавра, Ленинградра, Горькинче, Свердловскра, Пензăра, Куйбышевра тата Россия Федерацийĕн кĕрекен ытти хуласенче заочниксен лабораторла-экзаменла сессийĕсем пулса иртеççĕ.

Кăçал педагогика институчĕсемпе учительсен институтсенчен заочнă йĕркепе 20 пин çын вĕренсе тухать. (ТАСС).

Минералоги музейĕ

ЛЬВОВ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Львоври И. Франко ячĕпе тăракан государство университечĕ хăйĕн минералоги музейĕ—Совет Союзĕнчи чи ватă музейсенчен пĕри—пĕр çул тултарнине паллă тунă. Музее пухнă 10 пин ытла экспонат Карпатран пуçласа Инçет Хĕвелтухăçне çитиччен, Кавказран пуçласа Арктикăна çитиччен тĕрлĕ вырăнсене минералоги енĕпе палăртса тăраççĕ. Музей сотрудникĕсем тĕрлĕ çĕршывсенчи нумай наукăпа тĕпчев учрежденийĕсемпе çыхăну тытаççĕ, пĕр-пĕрне минералсем улăштарса илеççĕ.

Музей туса хунăранпа çĕр çул тултарнă ятпа ĕнер университетра наукăлла сесси уçăлнă. Сессие ĕçне Мускав, Ленинград, Киев, Тбилиси, Харьков тата ытти хуласенчи учёнăй-геологсем хутшăнаççĕ.

Ачасен курорчĕ

ЕВПАТОРИ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Совет правительстви йышăннă тăрăх Евпаторире ачасен Пĕтĕм Союзри курорчĕ туса хунă. Евпатори — пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă курорт. Кунта ачасен «Пионер», «Смена», Крупская ячĕпе тăракан тата ытти нумай санаторийсем вырнаçнă. Кашни санаторире шкул уçнă. Санатори-дворецсене кучухнехи чи çĕнĕ аппаратурăпа пуянлатнă. Кунта пылчăкпа, тинĕс, хĕйăр тата хĕвел ваннисемпе, Мойнак кÿллинчи тăварлă шывпа сываттаççĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

1950 çулта Етĕрне районĕнчи Полянка ялĕнчи виçĕ колхоз пĕрлешнĕ. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз Киров ячĕпе тăрать. Колхоз пысăкланни унăн хуçалăхне хăвăрт аталантарма пулăшнă. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвтлăн малалла кайнă.

Колхозра выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада ĕçлет. 1952 çулта бригада 10 гектар çинче кашни гектартан 210 центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ, паха силос хывса хăварнă. Утă тата улăм нумай хатĕрленĕ.

Çак çитĕнÿсене пуринчен малтан ĕçе тĕрĕс организациленипе тунă. Артель правленийĕ бригада членĕсене урăх ĕçе куçармасть. Выльăх апачĕлĕх культурăсен туса илес ĕçрен пуçă вăхăтра кăна çак бригадăри колхозниксене уй-хир бригадисене пулăшаççĕ.

Кăçал бригада хăй умне татах та пысăкрах задачăсем лартнă. Тымарçимĕçсем акмалли лаптăка удобренисемпе лайăх çемçетнĕ, кашни гектар çине 120 лав тислĕк тата ытти удобренисем кăларнă. Пĕтĕм лаптăка трактора 27 сантиметр тарăнăш сухаланă. Тымарçимĕçсене 10 гектар çине икĕ кун хушшинче акса хăварнă. Силос культурисене те 10 гектар çине кĕске срокра трактор сеялкипе акнă. Кунсăр пуçне, пĕр çул тата икĕ çул ÿсекен курăксене те вăхăтра акнă.

Бригада членĕсенчен кашниех уй-хир ĕçĕсен малтанхи кунĕнчен пуçласа кĕрхунеччен хăйсен ĕçлемелле лайăх пĕлсе тăрать. Кулленхи ĕçре М. Караев, Л. Шаронова, Е. Юхтанова, 75 çулхи Петр Семенович Якушев тата ыттисем те пысăк тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Бригада кăçал кашни гектартан 400-шер центнертан кая мар выльăх кăшманĕ туса илессишĕн кĕрешет. Кунсăр пуçне 400 тонна силос хывса хăвараççĕ. Утă, улăм тата ытти выльăх апачĕсем хатĕрлессине анлăн туса пыраççĕ.

Г. МЫТИКОВ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕнче машинăпа çĕрулми лартаççĕ. Çĕрулми лартмалли СК-2 машинăна А. И. Исачкин тракторисчĕ А. М. Колесов юлташ ĕçлеççĕ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Механизаторсен ăмăртăвĕ

ЧУРАЧĂК. МТС директорĕн парти организацийĕ çураки ĕçĕнче К. Лаврентьев ертсе пыракан бригада мала тухнине палăртрĕç. Çак бригадăна МТС-ăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

И. Никитин, М. Анисимов, И. Афанасьев ертсе пыракан бригадăсем те çураки планне пысăк пахалăхпа ирттернĕ.

Кăçал планпа колхозсенче 500 гектар 25—27 сантиметр, 200 гектар 30 сантиметр тарăнăш сухалаçа ирхи çĕртме тумалла. К. Лаврентьев бригадинчи И. Васильев тракторист ирхи çĕртме сухине 25—27 сантиметртан кая мар сухалаçа пĕтерме йышăннă. Халĕ ку ĕçе пурнăçласа пырать.

И. КОНСТАНТИНОВ.

Хăмла ĕрчетеççĕ

ВĂРНАР. Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра 2,2 гектар çинче хăмла плантацийĕ тунă. Колхоз хăмларан çулленех пысăк тупăш илет. Иртнĕ çул государствăна хăмла парса 14 пин тенкĕ укçа тата 29 центнер тулă илнĕ. Хăмла плантацийĕнче ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркепе кашни ĕçкунĕ пуçне 2 тенкĕ те 57 пус укçа панă.

Колхозниксен хăмла плантацийĕнче ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Кунта 11 çынтан организациленĕ уйрăм бригада ĕçлет. Ăна тăваттăмĕш çул ĕнтĕ опытлă колхозник А. Васильев юлташ ертсе пырать. Васильев юлташ хăмла туса илес енĕпе кăçал Вăрнарта курсра вĕреннĕ. Вăл хăмла ĕрчетесси çинчен çырнă кĕнекесем вулать, малта пыракансен опычĕпе паллашать. Хăмла ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмах М. Егорова, Е. Герасимова тата В. Тимофеева юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркепе 300—500-шер тенкĕ укçа илнĕ.

Г. ПАВЛОВ.

Обязательствăсене пурнăçлассишĕн

ПЕРВОМАЙСКИ. Район Совечĕн депутачĕ Татьяна Степановна Тимофеева — Шевченко ячĕпе тăракан колхоз председателĕ. Çак колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 17 центнертан кая мар тĕштырă туса илме обязательство йышăнчĕç. Вĕсем обязательствăна чысăн пурнăçлассишĕн ăнăвна пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Çураки планне колхоз вăхăтра тултарчĕ. Ку ĕçре МТС-ăн трактор бригади нумай пулăшнă. Çураки вăхăтĕнче уйрăмах П. Тарасов, А. Мулин, А. Воронов трактористсем тăрăшса ĕçлерĕç, смена задание яланах ирттерсе тултарса пычĕç.

Колхоз правленийĕ çураки пахалăхĕн кĕрешес ĕçе лайăх йĕркелерĕ. Уйхир бригадирĕсем механизаторсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăчĕç. Колхоз председателĕ уй-хир бригадирĕсемпе тата трактора тунă ĕçсене 5 кунта пĕрре йышăнса тăчĕ. Ĕçе çакăн пек тĕрĕслени кура механизаторсем аках-сухана пысăк пахалăхпа туса пычĕç.

Кăçал техникăллă культурăсем акнă лаптăк 33 гектар ÿсрĕ. Вăл шутран хĕрĕн 17 гектар акнă. Çак культурăсене вăхăтра акса хăварчĕç. Кантăр акмалли вырăна 2.500 лав тислĕк кăларнă тата минераллă удобренисем хывнă. Пĕтĕм акмалли лаптăка та минераллă удобренисем сапса çемçетнĕ. Аваснсене трактор сеялкипе акнă.

Колхоз членĕсем общество выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлеме çирĕп никĕс хывса хăварма тăрăшнă. Нумай çул ÿсекен курăксем 65 гектар вырăнне 70 гектар, тымарçимĕçсем 8 гектар вырăнне 10,5 гектар, силос тумалли культурăсем 5 гектар вырăнне 11 гектар акрĕç. Пĕр çул ÿсекен курăксене те планран ирттерсе акнă. Тымарçимĕçсене акмалли вырăна акас умĕн аммиаклă селитра сапнă. Çĕрулмине майăн 16-мĕшĕ тĕлне лартса пĕтернĕ.

А. ТУКМАКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Вĕреннине практикăлла ĕçпе çыхăнтаратпăр

ÇĔРПУ. Шĕнер ял Советĕнчи территорилĕ пуçламăш парторганизаци ялти тĕрлĕ учреждениcенче ĕçлекен 11 коммуниста пĕрлештерсе тăрать. «Красный этновец» колхозра пуçламăш парторганизаци çук, çавăнпа та ку колхозри уйрăм коммунистсем пирĕн организацире тăраççĕ.

Ялти учреждениcемпе организацисен ĕçне лайăхлатас тĕллев тытса, эпир коммунистсемпе кадрсен идейăлла-политикăлла пĕлĕвне ÿстерес задача лартрăмăр. Кашниннe уйрăм калаçнă хыççăн 9 çын И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружока çÿреме килĕшрĕç. Ку кружока эпĕ хам ертсе пытăм. 11 работник, хăйсен вăйĕпе пĕлĕвне шута илсе, коммунистсен партийĕн историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренме килĕшрĕç. Кружока ялти шкул заведующийĕ П. Григорьев юлташ ертсе пычĕ.

Кружоксем организациленни—ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха. Иртнĕ çулсенчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене аса илсе, эпир кăçалхи вĕренÿ çулĕнче занятисем иртерес ĕçри формализма пĕтерме, дисциплинăна çирĕплетме мерăсем йышăнтăмăр.

Кружоксен ĕçĕнчи ответлă тапхăр вăл партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕреннĕ кунсем пулчĕç. Эпир кашни вĕренекен умне çакăн пек задача лартрăмăр: съезд решенийĕсене вĕренсе пĕлни çеç çителĕксĕр, çав решенисене хамăрăн практикăлла ĕçре пурнăçа кĕртсе пыма пĕлмелле тата мĕнпур вăя хурса тăрăшмалла.

Вĕренÿ çулĕ усăсăр иртмерĕ. Пирĕн коммунистсемпе кадрсен политикăлла пĕлĕвĕ, унпа пĕрлех ĕçри идейăлăхĕ те ÿсрĕ. Вĕсем ялти политикăлла-массăлла ĕçе активлăрах хутшăнаççĕ, хăйсем ертсе пыракан учреждениcемпе организацисен ĕçне КПСС XIX-мĕш съезчĕ хушнă пек лайăхлатма тăрăшаççĕ.

Фельдшер пункчĕн заведующийĕн Г. Александров юлташăн КПСС членĕн кандидатĕнче пулмалли стажĕн срокĕ çулталăк ытла иртнĕччĕ. Эпир вара, XIX-мĕш съезд çирĕплетнĕ Устав тăрăх, Александров юлташ çинчен парторганизаци пухăвĕнче сÿтсе яврăмăр. Вăл хăйĕн идейăлла-политикăлла шайне хăпартас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене те тинкерсе вĕренме тăрăшман.

Парторганизацин пухăвĕ Александров юлташа кандидата тăмалли срока 6 уйăх хушши тăсса пама йышăнчĕ тата ăна хăйĕн политикăлла пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе тимлĕн вĕренме хушрĕ. Çак решение йышăнса, эпир Александров юлташ мĕнле вĕреннине тăтăшах тĕрĕслерĕмĕр, кунпа пĕрлех ăна политикăлла-массăлла ĕçе явăçтартăмăр.

Парти пухăвĕн решенине пурнăçласа, Александров юлташ кружокра пысăк тимлĕхпе вĕренчĕ, фельдшер пункчĕн ĕçне лайăхлатрĕ, халĕ парти поручениййĕсене тÿррĕн пурнăçласа пырать. Ултă уйăх иртсен вăл, хăйне кандидатран члена илме ыйтса, заявлени пачĕ. Эпир унăн ыйтăвне тивĕçтертĕмĕр. Райком бюровĕ те, пирĕн решение çирĕплетнĕ чухне, Александров юлташ хăйĕн идейăлла-политикăлла пĕлĕвне хăпартас ĕçре пысăк ÿсĕм тунине палăртрĕ.

Парти членĕн кандидачĕ Г. Федоров колхозник КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене тарăнăн вĕренме тăрăшрĕ. Лайăх вĕреннине тата колхозниксене коммунизмла воспитани парас ĕçе активлăн хутшăннине шута илсе, эпир Федоров юлташа та кандидатран члена илме йышăнтăмăр. Халĕ вăл тракторист пулса ĕçлет, колхозра çĕрĕç культурине хăпартассишĕн кĕрешет.

КПСС членĕ, ялпо правленийĕн председателĕ П. Федоров юлташ кружокра лайăх вĕренекенсенчен пĕри пулчĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене вĕреннĕ май, вăл ĕçсене чылай лайăхлатрĕ, суту-илÿ работникĕсене воспитани парас тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕ. Ялпо суту-илÿ планне халĕ кашни уйăхра тултарать, кооперации укçи-тенкине çаратнă тĕслĕхсем пĕтрĕç.

Политикăлла вĕренÿ шайне хăпартнă май коммунистсемпе кадрсен активлăхĕ тата ĕçри идейăлăхĕ ÿснине ытти тĕслĕхсемпе те çирĕплетсе пама пулать. П. Григорьев юлташ иртнĕ çулсенче колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ пулса ĕçленĕччĕ. Политика тĕлĕшĕнчен сисĕмлĕ пулманшăн, колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне киревсĕр пăснă тĕслĕхсене асăрхаманшăн парти райкомĕ Григорьев юлташа ятласа хăварнăччĕ. Кăçал вăл лайăх ĕçленине, партилле ĕçе хастаррăн хутшăннине шута илсе, райком Григорьев юлташа панă наказание каялла илме йышăнчĕ.

Парторганизаци çумĕнче уçнă икĕ кружокра икĕ колхоз председателĕ, ял Совет председателĕпе секретарĕ, ялпо работникĕсем тăваттă, икĕ фельдшерпа пĕр санитарка, уй-хир бригадирĕсемпе рядовой колхозниксем пиллĕкĕн вĕренчĕç.

Икĕ кружокĕнче те 26-шар заняти иртернĕ. Кăçалхи занятисем вĕренекенсем лайăх çÿренипе палăрчĕç. «Коммунистсен партийĕ—Совет обществин ертсе тата çул кăтартса пыракан вăйĕ, ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин организаторĕпе хавхалантаракан» темăпа иртернĕ итоглă занятисене вĕренекенсем уйрăмах пысăк активлăхпа хутшăнчĕç.

КПСС XIX-мĕш съезчĕ парти организацийĕсенче идеологилле ĕçе парти задачисен çÿлĕшне хăпартма кирлине кăтартса пачĕ. Колхозлă ялти хуçалăхпа культура строительствине аталантарас енĕпе тăракан пысăк задачăсем пире коммунистсемпе кадрсен идейăлла-политикăлла шайне хăпартас, ялти ĕççынни массисене коммунизмла воспитани парас ĕçе малашне тата вăйлатса пыма хушаççĕ.

Пирĕн парторганизаци çумĕнчи кружоксем вĕренÿ çулне, пĕтĕмĕшпе илсен, ăнăçлă вĕçлерĕç. Коммунистсен тата партире тăман кадрсен малалла вĕренес туртăмĕ ÿсрĕ. И. В. Сталин биографине вĕреннĕ юлташсем пурте малашне «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружока çÿреме килĕшрĕç. Парти историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренекенсем иккĕмĕш çулхи программăна вĕçличченех кружокра вĕренме йышăнчĕç.

Çакăн пек пирĕн кăçалхи вĕренÿ çулĕн итогĕсем. Идеологилле ĕçе малалла вăйлатни, коммунистсемпе кадрсене марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланатарни пуçламăш парторганизацин ĕçне лайăхлатма, колхозла ял умне партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене пурнăçлас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума май парĕ.

А. АНДРЕЕВ,
Шĕнерти территорилле пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

Дисциплина çирĕпленчĕ

Пирĕн Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи парти организацийĕ кăçал XIX-мĕш съезд материалĕсене вĕренмелли кружок турĕ. Съезд материалĕсене вĕренни коммунистсен пĕлÿлĕхне ÿстерчĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетрĕ.

Партин çĕнĕ Уставне вĕренме пуçличчен пирĕн организацинчи коммунистсен дисциплини начарччĕ. МТС директорĕ пулнă коммунист Волков хăйĕн пĕлÿлĕхне хăпартас тĕлĕшпе нимĕн те тумастчĕ: хаçат-журналсем, илемлĕ литература вуламастчĕ, киносене çÿреместчĕ. Вăл вăхăта ĕçкĕпе иртерме пуçларĕ. Хăйĕнпе пĕрле вăл МТС аслă механикне Афондеркин, аслă бухгалтер Шихранкин юлташсене те явăçтарчĕ. Пĕррехинче Волков, Афондеркин, Шихранкин çĕрĕпех ĕçнĕ, тепĕр кунне ĕçе те тухайман. Çавна пула МТС-ра ремонт ĕçĕсем юлнăçемĕн юлса кайрĕç, республикăра пирĕн МТС тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене юсассипе 32-мĕш вырăна тăрса юлчĕ.

Çак киревсĕр ĕçсем çинчен парторганизаци сÿтсе яврĕ. Парти дисциплинине пăснăшăн Волков, Афондеркин, Шихранкин юлташсене çирĕп ответ тыттарчĕ, парти райкомĕн бюровĕ пирĕн решение ырласа, Волкова ĕçрен хăтармалла турĕ. Пуçламăш организаци парти дисциплинине пăсакан Палейкин, Степанов юлташсене те хытă ятласа хăварчĕ. Дисциплинăна пăсакансем пирĕн парти организацинче татах та пурччĕ. Трактор бригадин бригадирĕ Самылкин юлташ тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсанă вăхăтра час-часах ĕçе кая юлса тухнă, хăш чух пачах тухман. Çавăн пек ĕç дисциплинине пăснăшăн Самылкин коммуниста партбюро ларăвĕнче асăрхаттарса хăварма тиврĕ. Дисциплинăна пăсакансене МТС-ра уйăхра пĕрре тухакан стена хаçатĕнче критиклерĕмĕр, «боевой листокра» çыртăмăр.

Çакăн хыççăн пирĕн организацире дисциплина чылай çирĕпленчĕ, коммунистсем кружоксен занятийĕсене йĕркеллĕ çÿрерĕç, харпăр хăй участокĕсенче авангардах ĕçлеме пуçларĕç. 2 трактористăна парти членĕн кандидатне илтĕмĕр. Таланцева, Палейкин, Вашуркин, Самылкин коммунистсем ертсе пыракан трактор бригадисем халĕ МТС-ра малта пыракан бригадăсем пулса тăраççĕ.

Яндайкин, Вазяков, Кудряшов, Кожевников, Шуськин коммунистсем малта пыракан трактористсем шутланаççĕ. Вĕсем кашниех сменăри нормăна 110—115 процент тултарса пыраççĕ.

С. ИЛЬИН,
Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи партбюро секретарĕ.

И. В. Сталинăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставка

Чăваш государство педагогика институтĕнче И. В. Сталинăн çамрăк чухнехи пурнăçне тата унăн пĕтĕм ĕçне кăтартакан пысăк выставка йĕркеленĕ.

Кунта И. В. Сталин Кавказри социал-демократсен кружокне ертсе пынине, тĕнчери пролетариатăн икĕ çулпуçĕ В. И. Ленинпа И. В. Сталин тĕл пулнине, большевиксен партине организациленине, вĕсем Российăра социализмла революци тăвассишĕн епле кĕрешнине кăтартакан картинăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Выставкăра Отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕнче И. В. Сталин Совет Союзне ертсе пынине кăтартакан материалсем нумай. Çавăн пекех выставкăра Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи тапхăрта И. В. Сталин Совет Союзĕнчи ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнине кăтартакан картинăсем интереслĕ.

Партин XIX съезчĕ, унта çулпуç юлашки хут тухса каланă сăмах çинчен калакан картинăсем, унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ пирки йĕркеленĕ материалсем, çулпуçăн юлашки кунĕсене кăтартса паракан картинăсем чĕрене хумхантараççĕ.

В. ШАЛТАЙКИН.

Истори вĕрентекенсен семинарĕ

ИШЛЕЙ. КПСС райкомĕ районти шкулсенче истори тата ССР Союзĕн Конституцине вĕрентекен учительсем валли И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ тăрăх семинар иртерчĕ. Семинарта: «Хулапа ял хушшинчи, ăс-тăн ĕçлевĕпе вăй-хал ĕçлевĕ хушшинчи хирĕç-хирĕçлĕхе пĕтересси çинчен тăракан ыйту, çавăн пекех тата вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтересси çинчен тăракан ыйту», «Тĕнчери пĕрлĕхлĕ рынок пайланса кайни çинчен тата тĕнчери капитализм системин кризисĕ тарăнланса пыни çинчен тăракан ыйту» темăсем тăрăх калаçусем пулчĕç. Юлашкинчен учительсем «Капитализмла çĕршывсем хушшинче вăрçăсем пурпĕрех пуласси çинчен тăракан ыйту» темăпа лекци итлерĕç.

А. ЕГОРОВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци çумĕнчи парти историне пĕрремĕш çул вĕренмелли кружокра вĕренекенсем итоглă занятире. Кружокра вĕреннĕ К. И. Спиридонов (ура çинче тăраканĕ) ыйтусем çине ответлет. Сылтăм енчен иккĕмĕшĕ—кружок руководителĕ В. М. Плотников юлташ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Стена хаçачĕсене пăхса тухни

Строительствăна хăвăрт, йÿнĕ, лайăх тăвассишĕн кĕрешмелле

Канашри строительствăна монтаж кантурĕнчи коллектив умĕнче ответлă задача тăрать. Унăн вагонсем юсакан заводри рабочисем валли пурăнмалли çурт-йĕрсем лартмалла, предприятисене вăйлатма пулăшмалла, çĕнĕ вокзал, вăтам шкул т. ыт. те туса пĕтерсе ĕçе кĕртмелле. Кăçалхи плана тултарнипе пĕрлех, пĕлтĕр тума ĕлкĕреймен объектсене те туса çитермелле.

Строительствăра ултçĕр çын ытла ĕçлет. Вĕсене хăйсен умĕнчи задачăна пурнăçлама мобилизацилес ĕçре стройкăра тухакан «Строитель» стена хаçачĕн те паллă вырăн йышăнмалла.

Ку хаçат иртнĕ çулхи августра тухма пуçланă. Унтанпа вăл хăйĕн вулакан ĕсен умне чылай çивĕч ыйтусем кăларса тăратнă. Кунти рабочисенчен нумайăшĕ — ĕнерхи колхозниксем. Вĕсем строительствăра пуçласа ĕçлеççĕ. Хăшпĕрисем унти йĕркесене пĕлмеççĕ, квалификаци çителĕксĕр пирки, ĕçе тĕрĕс мар тăваççĕ. Çакна шута илсе, стена хаçачĕ рабочисене хăйсен ĕçне ăнланса тума, дисциплинăна пĕр пăркаланмасăр пăхăнса пыма чĕнет тата вĕрентет.

Строительство йÿне лартăр тесси, кашни пăтана, кирпĕче, хăмана перекетлĕ тыткаламалла. Çакăн çинчен çырать ĕнтĕ Понькин рабкор хăйĕн статьинче. Вăл Вахитов лавçă хăйĕн килĕнче çунтарма ĕçе юрăхлă материалсене илсе кайнине, строительствăри цехсенче хутмалли япаласене виçесĕр расходланине те палăртать.

«Пирĕн пурин те строительство материалĕсене лайăх сыхласа усрама, перекетлĕ тыткалама тăрăшмалла. Унсăрăн строительствăн хăйне ларакан хакне йÿнетме çук. Социализмла пурлăха куç шăрçине сыхланă пек упрасси вăл—кашни рабочин чи таса тивĕçĕ»—тесе вĕçлет автор хăйĕн статьине.

Хăйĕн умĕнчи задачăна хаçат тĕрĕс ăнланать пулсан та, унăн пысăк çитменлĕхĕсем пур-ха. Вăл çитменлĕхсенчен пĕри—строительствăри рабочисен ăмăртăвне кăтартманни пулать. Стройкăра ăмăртăва çителĕксĕр организациленĕ. Ăмăрту итогне вăхăтра тумаççĕ. Хаçат вăл çитменлĕхсене вăхăтра критиклемест. Уйрăм рабочисем нормăна иртерсе тултарнине кăтартакан сводкăсем хаçатра сайра хутра çеç пулаççĕ. Малта пыракансен опычĕпе паллаштарасси çук. Хаçат цехпа цех хушшинчи ăмăртăва та сутатмасть. Строительствăра каменщиксем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем мĕнле ĕçлени çинчен хаçат ку таранччен пĕр сăмах та асăнман.

Строительствăра тĕрлĕрен механизмсем нумай. Вĕсемпе туллин усă курни ĕçе нумай хăвăртлатма, йÿнетме, çăмăллатма, рабочисене хăйсен нормине ăнăçлă тултарса пыма пулăшнă пулĕччĕ. Анчах механизмсемпе кунта туллин усă курмаççĕ. Сăмахран, çĕнĕ çурт лартма котлован чавнă çĕрте тăпра туртакан транспортер пушăлла тенĕ пекех çаврăнса ларать. Хăшпĕр машинăсемпе механизмсене пачах ĕçлеттерме тытăнман. Хаçат çак çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса памасть.

Кунти хăшпĕр руководительсем, рабочисене вĕрентсе квалификаци илме пулăшас вырăнне, хăйсен пĕлĕшĕсемпе тăванĕсене пуçтарма тăрăшнă. Çавна пула строительствăри çитменлĕхсене вăхăтра сирсе яма май килмен. Партин XIX-мĕш съезчĕ çемьеленсе ĕçлеме юратакан пуçлăхсене тăтăклăнах сивлерĕ пулсан та, хаçат вĕсене çивĕччĕн критиклеме хăюлăх çитереймен.

Малта пыракансен опытне анлă сарас, рабочисен культурăпа йăла условине лайăхлатас, строительствăри сезонлăха пĕтерсе, ĕçе хăвăртрах та лайăхрах тăвас енĕпе хаçат çителĕксĕр кĕрешет.

Стена хаçатĕнчи материалсенчен нумайăшĕ вăрăм, вĕсене имесе, мăка чĕлхепе çырнă. Вулакансене хаçат патне пыма туртакан карикатурăсем пачах çук.

«Строитель» хаçата çырса тăракансем питĕ сахал. Çавна пула редколлеги членĕсен хаçата хăйсен материалĕсемпе тултарма тивет. Çыракансем сахалли строительствăри парти организацийĕ хаçатра çырнă материалсен витĕмлĕхĕшĕн кĕрешменнинчен те нумай килет.

Редколлегинчи юлташсем пурте кантурта ĕçлеççĕ. Рабочисен массипе тачă çыхăнса тăма хаçата çакă та чăрмантарать. Стена хаçатне, малашне виçĕ экземплярпа кăларма тытăннă май, чăвашла çырнă материалсем те кĕртсен аван пулмалла.

Хаçата уйăхра пĕрре кăларнине çителĕклĕ теме çук. Эрнере пĕрре кăларни хаçата витĕмлĕрех тума, унăн организаторла рольне ÿстерме, ăна пурнăçпа тан пыма пулăшнă пулĕччĕ.

Строительствăри парти организацийĕ стена хаçатне хăйĕн çивĕч хĕçпăшалĕ тума тăрăшман, редколлеги отчетне пĕррe те итлемен. Коммунистсем хаçата çырмаççĕ. Редколлегине суйланă юлташсене темиçе ĕç панă. Сăмахран, хаçат редакторĕ М. Ананьина юлташăн тата икĕ тĕрлĕ поручени пур. Çавна пула вăл нихăшне те тума ĕлкĕреймест.

Юлашки почтăран

Тÿрлетмен йăнăшсем

Советски районĕнчи «Совет ялавĕ» хаçатăн 31-мĕш номерĕнче «Комсомолецсемпе çамрăксен политикăлла вĕренĕвне лайăхлатмалла» ятлă статья пичетленсе тухнă. Унта йăнăш çырнă предложенисем пур.

Статьяра «И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи экономикăлла проблемисем» тесе тĕрĕс мар çырнă. Ку произведенин ячĕ, паллă ĕнтĕ,—«ССР Союзĕнчи **социализмăн** экономикăлла проблемисем».

Хаçат комсомолăн пуçламăш организацийĕсене темшĕн ят парса тухнă. «Восход» тата Киров ячĕпе тăракан комсомол организацийĕсем» текен предложенисене статьяра темиçе те курма пулать.

«Карл Маркс ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомол организацийĕсенчи **пур** комсомолецсене политвĕренĕве явăçтарман» тесе çырнă хаçат. Паллах ĕнтĕ, **çуи** комсомолецсене вĕренĕве явăçтараймăн.

Хаçат хăйĕн çакăн пек йăнăшĕсем пирки тÿрлетнисем памасть.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Çĕрпÿ районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри çитменлĕхсем çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва тĕрĕслеме Çĕрпÿ районĕнчи ялхуçалăх пайне янăччĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи ялхуçалăх пайĕ Калинин ячĕпе тăракан колхозра çырура асăннă çитменлĕхсене пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ.

Çул тăвакан механизаторсем

1. Чул ватнă çĕрте

Сĕтел-пукан комбиначĕ патĕнче чугун çул юппин икĕ енĕпе шурă чул куписем выртаççĕ. Чула Вăрмартан тата Горький облаçĕнчен илсе килеççĕ. Кунта чула ватса хатĕрлеççĕ.

Паян Валентина Давыдова бригади ĕçлет. Бригадăра пурĕ вунçичĕ çын. Пурте çамрăкскерсем. Вырăссем те, чăвашсем те пур. Вĕçĕмсĕр кăлтăртатса ларакан машина нумай чул ватма пултарать. Бригада членĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ваннă чул машинăран тухса транспортерпа барабана лекет. Барабан çаврăннă май, аяла виçĕ сорт чул аланса юлать. 4—5 сантиметр пысăкăш катăксем, барабан витĕр тухса, каллех транспортер çине, ун тăрăх пырса, тиемелли пункта лекеççĕ.

В. Давыдова бригади тепĕр бригадăпа—Мария Васильева бригадипе ăмăртса ĕçлет.

— Валентина Давыдова бригадинчи хĕрсем ĕçе маларах килеççĕ,—тет Рудаков десятник.—«Ирхи ĕç ÿсĕмлĕ», теççĕ вĕсем. Бригада сменăра, 40 кубометр вырăнне, 45—46 кубометр чул ватать. Акă ĕнерхи кăтартусем,—çывăхри çурт çумĕнче çакăнса тăракан хăма çине тĕллесе кăтартрĕ десятник.

Хăма çинче пĕтĕмпе те икĕ хушамат, тăватă цифра. Сĕмĕрлепе Чутай хушшинче вĕсем пекех çамрăк хĕрсем çул тăваççĕ, вĕсем чул ытларах ярса парасса кĕтеççĕ. Вĕсене тытса тăма юрамасть. Ĕнер Давыдова бригади задание 187 процент, Васильева бригади 150 процент тултарнă.

Бригадăсем мĕнле ĕçлени çинчен сăмах тапратсан, Рудаков десятник пăртак шухăшласа тăчĕ те çапла каласа пачĕ:

— Давыдовăн хăйне евĕрлĕ «секрет» пур. Вăл рабочисене ĕçе пĕлсе вырнаçтарать. Акă, пăхăр-ха эсир Александра Артамонова çине. Е Анисия Полкановăна илер. Акă, Пелагея Малова, лешĕ—Акулина Кудрявцева...

Хăма тăрăх чул йăтса хăпаракан хĕрсене кăтартать десятник.

Çаннисене тавăрнă хĕрсен хул мускулĕсем мăкăрăлса тăраççĕ. Икшерĕн-икшерĕн хирĕç-хирĕç анса хăпараççĕ вĕсем. Тем хушăра носилка çине пысăк чул муклашкисене çавăрса хураççĕ, тем хушăра çĕклеççĕ, самантра площадка çине хăпарса дробилка ăшне тăкаççĕ. Çăмăллăн, маттур ĕçлеççĕ хĕрсем.

Пĕр ушкăн хĕр барабан айĕнчи вĕтĕ чула аякка илсе купалать, виççĕмĕш ушкăнĕ чула грузовик-самосвал çине тиет. Харăс килнĕ грузовиксенчен пĕри хĕрсем патне пырса тăрать, тепри тиемелли пункт айне пырса тăрать. Бункера кашни 10—15 минут хушшинче пĕр машина тиемелĕх 2—2,5 тонна чул тулать.

Паян икĕ самосвалпа чул турттараççĕ, ыттисемпе хăйăр кÿрсе тăраççĕ.

2. Çĕмĕрлепе Хĕрлĕ Чутай хушшинче

Машинăсемпе çул тăвакан станци (МДС) кăçал апрель уйăхĕнчех ĕçе тытăнчĕ. Хула хушшинчи чи йывăр участокра, 500 метр тăршшĕнче, çĕр хăпартса чул сарса тухрĕ. Халĕ кунта машинăсем сил пек вăшлатса кăна иртеççĕ. Çатма пек тикĕс çулпа хăвăрт пынине савăнса пăхнă май, ку çула тăвакансене ăшра тав тăватăн. Мĕнле вăй-халпа, камсем тăваççĕ-ха ăна?

Кăмаша уйĕнчен иртсе вăрмана кĕрсен, тикĕс çул Саланчăка çитиччен тăсăлать. Анчах кунта та чул куписем инçетренех курăнса выртаççĕ. Ку чула хĕлле турттарса хунă.

Саланчăкран иртсе пĕр виçĕ километр кайсан, иккĕмĕш отряд ĕçлет. Унăн пĕр пайĕ кунта, вăрманти кукăрта, тепĕр пайĕ—Атнарта.

Иртнĕ çулсенче кашни отряда механизмсем уйăрса панă, кашни отряд пур ĕçе те хăех тунă. Ĕçе кун пек йĕркелесен, отряд начальникĕ е техникĕ пур ĕçе те курса ертсе пыраймасть. Сăмахран, начальник чул саракансем патне кайнă пулсан, ку пунктран икĕ-виçĕ километр аякра ĕçлекенсен пĕр-пĕр ыйту сиксе тухсан, ăна татса париччен чылай вăхăт иртет, механизмсем ахаль тăраççĕ. Çавна шута илсе, кăçал кунта механизмсемпе çĕр ĕçне тăвакансене хăйсене пĕр отряд тунă. Вĕсем чи малта, çул тăвакансен пуçĕнче пыраççĕ.

Икĕ бульдозер тăпра тĕксе хăпартаççĕ: каялла чакаççĕ те, умри çĕççисене антарса лартса, малалла тĕртсе пыраççĕ.

— Акă Ксенофонтов, Дмитрий Петрович,—паллаштарать пире пĕрремĕш отряд начальникĕ Федоров юлташ.—Пĕр тăван механизаторсем. Акă Иван Петрович, хăйăр турттарать. Тата икĕ тăванĕ хулара, вĕсем тракторпа ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн патра мар, урăх çĕрте ĕçлеççĕ. Пĕлтĕр Дмитрипе Иван пĕр бульдозерпа ылмашса ĕçлерĕç. Дмитрий шăллĕне вĕрентсе çитерчĕ-çитерчех. Халĕ Иван хăй халлĕн скреперпа ĕçлет.

Бульдозеристсем, скреперистсем нормăна куллен 200 процента яхăн тултарса пыраççĕ. Федоров юлташ бульдозеристсем мĕнле ĕçленине кăтартакан пĕр тĕслĕх каласа пачĕ.

Çул хĕрринчех хăйăр илме карьер уçмалла пулнă. Хăйăр сийне çитес пулсан, метр çурă хулăнăш сиелти сие—3 пин кубометр çĕре—аяккалла кăларса пăрахмалла пулнă. Çакна тума пĕр бульдозерпа 10 кунтан кая мар ĕçлеме кирли палăрнă. Опытлă бульдозеристсем Дмитрий Петрович Ксенофонтовпа Николай Степанович Паничкин çак ĕçе икĕ кун хушшинче туса пĕтернĕ, нормăна 250-шар процент тултарса пынă.

Бульдозерпа скрепер иккĕшĕ те пĕр ĕçех тăваççĕ: çул çине тăпра хăпартаççĕ. Бульдозерпа çывăхри тăпрана, скреперпа аякран кÿрсе килнĕ тăпрана купалаççĕ. 25 метртан тăпра хăпартнă çĕрте бульдозер 125 çын вырăнне ĕçлет. Скрепер 100 метртан пĕр сменăра куçарнă тăпрана, ал вĕççĕн ĕçлес пулсан, 380 тачкăпа ĕçлесе, 63 лавпа турттарса тăмалла пулĕччĕ.

Халĕ машинăсемпе 700 метр тăршшĕ çула чул сарма юрăхлă туса хунă. Пĕтĕмпе 10 пин кубометр тăпра хăпартнă, пĕр пин кубометр хăйăр турттарса хунă. Сезон пуçланнăранпа пĕрремĕш отряд 30 пин кубометра яхăн çĕр ĕçĕ тунă.

Пĕр самант хушшинче Иван Петрович Ксенофонтовпа Сергей Павлович Ермишин скреперистсем умлăн-хыçлăн темиçе хутчен пырса карьертан хăйăр ăстарса илчĕç те çул çине сапса тухрĕç.

— Ку ĕçе Чутай районĕнчи колхозниксен тумалла, — тет Федоров юлташ.—Иккĕмĕш отряд ĕçне тытса тăрас мар тесе, паян скреперистсене хăйăр турттарма хушрăм. Паян ак ку участока сарса пĕтереççĕ,—тĕллесе кăтартрĕ вăл чул саракан хĕрсен ушкăнĕ çине.

Пĕрремĕш отряд çумĕнче 18 çын—пулăшакансен бригади ĕçлет. Вĕсене Атнар хĕрĕ Л. Кузнецова ертсе пырать. Машинăпа хăпартнă тăпрана вырнаçтарса, вĕсем çул кÿлепине кÿреççĕ, хăйăр сапма вырăн хатĕрлеççĕ. Вĕсем хыççăн иккĕмĕш отряд пырать.

Иккĕмĕш отряд. Кунта вăхăтлăха ĕçлеме Чутайпа Çĕмĕрле районĕсенчен хĕрсем килнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ пĕлтĕр те ĕçленĕ, çавăнпа вĕсем опытлă. Чылай ĕçсене вĕсем хăйсемех, техник кăтартмасăрах, тума пултараççĕ. Чул муклашкисене çăтă-çăтă вырнаçтарса тухаççĕ. Тикĕсленĕ хăйăр çине 5—6 сантиметр пысăкăш чулсем тăкаççĕ.

Кунти ĕçе ертсе пыракан Елизавета Гавриловна Жуленкова техник пире тĕп ĕçе мĕнле тунипе паллаштарать.

— Ку сие сарса пĕтерсен, чула 5 тонна таякан катокпа пусаратпăр. Вăл ĕçе Немцов тăвать.

Н. Немцов юлташ 5 тонна таякан катокпа пĕррe малалла, тепре—каялла икĕ енчен тухса, çул варринелле пусарса пырать.

— Ун хыççăн эпир çула шăваратпăр,—тет техник.—Пирĕн ун валли машина-цистерна пур. Ун краннe уçса яраççĕ те—пĕтĕм шоссе сарлакăшĕпе шыв пĕрĕхет. Шыв чула çыпăçтарса хытарма кирлĕ. Çулне те ăна шывпа тытăнса тăракан шоссе, теççĕ.

Шăварнă хыççăн вара йывăртарах, 10 тонна таякан катокпа хытараççĕ. Кун хыççăн чул ниçта хусканми вырнаçса ларать. Каярахпа 3—4 сантиметр пысăкăш чулсем сараççĕ. Ку сийе те çав майпах—малтан çăмăл катокпа, шăварнă хыççăн—йывăр катокпа пусараççĕ. Ун хыççăн виççĕмĕш сий—«клинец» каять. Ку вара вĕтĕ чула пусарнă хыççăн юлакан шăтăксурăка питĕрет, савăлласа хурать (çавăнпа вырăсла ячĕ те «клинец»). Кăна та малтанхи сийсене пусарнă пекех пусараççĕ.

Пусарас ĕç катокпа пĕрре-иккĕ тухнипех пулмасть иккен. Каток айне пăрахнă чул муклашки ванса кайсан тин ĕç пĕтнĕ теме пулать.

Виççĕмĕш сий çине чул çăнăхĕ сапаççĕ. Ку вара хăйăр вырăнне пулать, вăл чул сийне сасартăк ванса каясран сыхлать.

Эпир калаçса тăнă хушăра чул саракан хĕрсем çул вĕçне çитрĕç.

— Ак çакăнта тепĕр носилка кирлĕччĕ. Лена, илсе килĕр-ха,—васкавлăн хушрĕ Галина Помощникова, Кăмаша хĕрĕ, хăйĕн юлташне.

Елена Чубойкинăпа Татьяна Артемьева юлашки носилка чул илсе килсе тăкрĕç, Галина шаблон тăрăх вырнаçтарса тухрĕ.

— Пулчĕ, Елизавета Гавриловна,—терĕ вăл техник енне çаврăнса.

Елизавета Гавриловна хĕрсемпе яланах савăнăçлă. Вăл вырăс, чăваш хĕрĕсемпе чылай вăхăт ĕçленĕ май, нумай чăваш сăмахĕсене пĕлет.

— Маттур, хĕрсем! Гудок,—шÿтлерĕ вăл.—Ларса канăр...

Çул варринче тăракан хĕрача шаблонне аяккалла илсе хучĕ, Елизавета Гавриловна, аллине сулса, катокпа ĕçлекен Немцова, ку пуçне çитичченех килме юрать тесе, сигнал пачĕ.

— Шурă шоссе те теççĕ пирĕн çула,—пасăр пуçланă калаçăва малалла тăсрĕ техник.—Эпир ăна шурă чултан тăватпăр-çке-ха. Çине нимĕнпе те витместпĕр. Тĕрĕс пăхса тăрсан, çула пилĕк çул хушшинче тĕкĕнме те кирлĕ мар.

Шывпа шăварса тунă çул уяр çанталăкра шултăркаса каять. Кун пек чухне çула е шыв сапса тăмалла, е ун тăрăх çÿреме чарса, аякран çул туса памалла. Кунсăр пуçне, тракторсене çÿретмелле мар.

* * *

Автомобиль транспорчĕ тĕлĕнмелле хăвăрт ÿссе пырать. 1940 çулхипе танлаштарсан, Çĕмĕрле хулинчи автотранспорт виçĕ хут ытла ÿсрĕ. Икĕ автобуспа Çĕмĕрлерен икĕ енне—Пăрачкавпа Етĕрнене—çынсене куллен турттараççĕ. Çул тунă çĕре çитсен, машинăсем такăр çултан пăрănса, шоссе аяккине тухаççĕ. Çамрăкрах е савăнăçлăрах шоферĕ çул тăвакан хĕрсене кабинăран пуçне кăларса аллипе сулса салам лать.

— Çул тăвакансене салам!..

Машина каллех чул сарнă çул çине тухать. Умра каллех пĕр тапхăр çатма пек тикĕс çул.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(«Коммунизм ялавĕ» корр.).

Çĕмĕрле хули.

Ачасен канăвне лайăх организацилер

Республикăри шкулсенче экзаменсем пырассĕ. Сывăх вăхăтсенчех каникул пусланать. Июнĕн 5-мĕшĕнче пионерсен хула тулашĕнчи малтанхи лагерĕсем, унтан ытти лагерьсемпе ачасен сывлăх учрежденийĕсем—çуллахи дачăсемпе туристсен базисем ĕçleме тытăнассĕ. Пĕрлештернĕ пионер дружинисен ĕçе тытăннă май ялсенчи вунпар пин пионерсем хăйсен малтанхи сборĕсене ирттерме хатĕрленессĕ.

Ачасен канăвне усăллă ирттерме партипе правительство пур майсене те туса парассĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче ачасем лайăх канччăр, сывлăха çирĕплетчĕр.

Кăçалхи çулла пирĕн республикăра профсоюз организацийĕсем тăвакан лагерьсенче 6.505 ача, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 1.180 ача ытларах пулать. Кунсăр пусне Шупашкар, Улатăр, Канаш, Сĕмĕрле, Çĕрпÿ хулисенче пионер лагерĕсем организациленĕ, аслă классенче вĕренекенсем валли клубсем уçассĕ. Красноармейски районĕнчи «Сталинец» колхозра республикăри малтанхи хут пионер лагерĕ ĕçleме тытăнать.

Шкул ачисен канăвне кирлĕ пек йĕркелес тесен, хатĕрленÿ ĕçĕсене вăхăтра туса ирттермелле. Ку енĕпе иртнĕ çулта пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Шăхасан, Сĕмĕрле районĕсенче пĕлтĕр пионер лагерĕсем валли кадрсем хатĕрлеме питĕ кая юлса тытăннăччĕ, васкаллă май вĕсем хушшине ăнсăртран лекнĕ çынсем те пулнă. Чапаевски поселокри лагерьте, вăрман тата сулă юхтаракан профсоюз обкомĕн, çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пионер лагерĕсенче малтанхи смена воспитательсем çитмен. Çавăн йышши çитменлĕхсем кăçал çĕрте те пулмалла мар.

Пĕлтĕрхи йăнăшсене кăçал та пĕтĕмпех шута илмен-ха. Чылай çĕрте ачасен çуллахи канăвне организацилес ĕçсем çителĕксĕр пулса пырассĕ. Акă, Сĕмĕрле, Куславкка, Улатăр районĕсенче ачасен канăвне йĕркелес тĕлĕшпе халĕ те комиссисем туман, пионер лагерĕсене ĕçleме кадрсем тупса çитермен. Лагерьсен ĕçleме тытăннăччен тĕрлĕ кунсем кăна юлчĕç пулин те, Куславккари сурт-йĕр тăвакан завод завкомĕ лагерь суртне юсаттарма тытăнман. Пуçламăш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсем, апат-симĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен профсоюз обкомĕсем хăйсен пионер лагерĕсемшĕн ытла та çителĕксĕр тăрăшассĕ, кирлĕ япаласем илсе пымассĕ.

Облпрофсоветăн, профсоюз обкомĕсен ачасен çуллахи канăвне йĕркелес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. Пионер лагерĕсен çурчĕсене юсаса çитерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, кирлĕ хатĕрсем çителĕклĕ илсе хатĕрлемелле. Профсоюз месткомĕсен, завкомсен тата профсоюз райкомĕсен пурин те ачасене пионер лагерĕсене ямалли плана тултарассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Шкул ачисен канăвне организацилессин—профсоюзсемпе комсомол организацийĕсен тата сутĕç органĕсен чи сывăх тивĕçĕ. Сутĕç министерствипе унăн вырăнти органĕсен комсомолпа профсоюз организацийĕсемпе пĕрле пионер лагерĕсем валли, ачасен ытти сывлăх учрежденийĕсем валли педагогсем, физкультура инструкторĕсем, вожатăйсем суйласа илмелле. Пĕрлештернĕ пионер дружинисем валли пур шкулсенче те учительсем, кружоксемпе экскурсисен тата походсен руководительсем уйăрса памалла.

Йĕпреç, Калинино районĕсенче ачасемпе çулла ĕçleме кадрсем уйăрнă, вĕсемпе семинарсем те ирттернĕ. Анчах та нумай районсенче кадрсем хатĕрлес ĕç япăх пырать, лагерьсемпе ачасен ытти учрежденийĕсене ĕçleме медицина работникĕсене вĕрентмессĕ.

Сутĕç органĕсен тата Сывлăх министерствин ВЛКСМ обкомĕпе пĕрле çуллахи вăхăтра ачасемпе ĕçleме уйăрнă пур работниксемпе те семинарсем ирттермелле, кирлĕ ыйтусене пĕтĕмпех тĕплĕн татса памалла.

Сутĕç органĕсемпе комсомол организацийĕсен, культурăпа сутĕç учрежденийĕсен, физкультурăпа спорт комитечĕсен ачасен сывлăх учрежденийĕсенче политикăпа воспитани, культурăпа массăлла тата физкультурăпа спорт ĕçне тĕплĕн организацилемелле. Шкул тулашĕнчи учрежденисенче, районти культура çурчĕсенче, паркĕсенче, стадионсенче, ыш станцисенче пур çĕрте те ачасемпе ĕçлессине лайăх йĕркелемелле. Калас пулать, культурăпа сутĕç учрежденийĕсен республикăри управленийĕ тата физкультурăпа спорт комитечĕ ачасене канма лайăх майсем туса парас тĕлĕшпе нимех те тумассĕ-ха.

Хуласемпе ялсенчи ачасен канăвне организациллессĕ çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Кĕçĕн класра вĕренекенсем валли сурт-йĕр управленийĕсем çумĕнче, садсенче площадкăсем, вăйă вылямалли вырăнсем туса памалла. Аслă класрисем валли хулари пионер лагерĕсен, профсоюз клубĕсен, стадионсен, пионер çурчĕсен çумĕнче аслă класрисен клубĕсем организацилемелле. Ялсенчи çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче пионерсене пĕрлештернĕ дружинăсене явăстармалла.

Ачасем çуллахи вăхăтра кружоксенче усăллă ĕçсем туса ирттерме, вĕсем унта хăйсен техникăлла, художестволла пултарулăхĕсене ÿстерме пултарассĕ. Натуралистсен, экскурсипе краеведени кружокĕсем ачасен тавракурăмне аталантарма пулăшассĕ. Экскурсисене ытларах çутçанталăка тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ирттермелле, ачасене предприятисене, колхозсене, МТС-сене илсе каймалла. Врач ирĕк панă пур ачасене те БГТО значокĕ илмелли нормăсене партармалла.

С. НИКОЛАЕВ,
ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ.

Районти хаçатсенчен

★

ÇУЛ-ЙĔР ĔÇНЕ ТЫТĂНЧĔÇ

Районти хăшпĕр колхозсем, çураки ĕçĕсене вĕçлесе пынă май, 1953 çулхи çул-йĕр строительствине хутшăнма пуçларĕç. Çак кунсенче Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Канашпа Тăвай хушшинчи çул çинче ĕçleме тытăнчĕç. Çак колхозранах платникĕсен бригади Асхва ялĕ хушшинчи пысăк кĕпере тума кайчĕ. «Канаш» колхозри платниксен бригади Канашпа Тăвай хушшинчи çул çинче ĕçлекенсене валли барак туса пĕтерчĕ.

Кăçал çул-йĕр работникĕсемпе колхозниксем Çĕнĕ Ахпÿртре 38 метр, Сиккасинче 40 метр тăршшĕ çĕнĕ кĕперсем туĕç.

Районти ытти колхозсем те çул-йĕр ĕçне массăллăн хутшăнассĕ.

«Коммунизмшăн».

Канаш.

ТЕЛЕФОН КĔРТЕÇÇĔ

Çĕнĕ Чалкасси ялĕн сăн-сăпачĕ çулсеренех çĕнелсе улшăнать. Халĕ кунта кашни колхозник килĕнче радио калаçать, сывăх вăхăтрах колхозри радиоузел ĕçleме пуçлать.

Çак кунсенче «За коммунизм» колхоз правленийĕ коммутатор туянчĕ. Часах бригадирсен килĕсене тата обществолла çуртсене пĕтĕмпе вунпĕр киле телефон кĕртессĕ.

«Вăйлă тырпулшăн».

Шăхасан.

ЧĔПСЕМ ТУЯНАÇÇĔ

Апрель уйăхĕнче Элĕкри инкубатор станцийĕ ĕçleме пуçларĕ. Инкубатор чăх, хур тата кăвакал чĕпписем кăларнă. Вĕсене районти колхозсем фермăсем валли илессĕ. «Молния» колхоз 1.100 чĕп. Шверник ячĕпе тăракан колхоз 1.000 чĕп илсе кайрĕç.

«Колхоз хаçачĕ».

Элĕк.

ТУРĔ КАМАЛЛА ПИОНЕР

Кивĕ Эйпеçри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен Кудряшов пионер ирхине, шкула кайнă чухне, çул çинче пĕр пĕчĕк хутаç тупнă. Хутаçра 150 тенкĕ укça пулнă. Шкула çитсен, вăл учительсене хăй çул çинче укçа тупни çинчен каласа панă. Часах укçа хуçи те тупăннă. Çак укçа Л. Хушаматлă хĕрарăмăн пулнă. Укçана хуçине панă.

«Коммунар».

Первомайски.

ВЫЛЯВ УКÇИ ТУЛЕНИ

Районти тĕп перекет кассинче государство заемĕсем тăрăх выляв укçи тÿлессе çултан-çулах ÿссе пырать. Иртнĕ çулта перекет касси заем облигацийĕсем тăрăх 405.935 тенкĕ выляв укçи тÿленĕ. Вăл шутра пĕр çын 6.250 тенкĕ, икĕ çын пилĕкшер пин тенкĕ, икĕ çын 2.500-шер тенкĕ, 21 çын пĕрер пин тенкĕ выляса илнĕ.

Перекет касси кăçалхи тăватă уйăх хушшинче кăна 162.515 тенкĕ выляв укçи тÿленĕ.

«Совет ялавĕ».

Советски.

* * *

КУКЕС. Юлашки çулсенче Шупашкар районĕнчи тĕп перекет кассинчи работниксем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Перекет кассисене справка сĕтелĕ пур. Район центрĕнчи пур учрежденисенче те выляв таблицисене тĕрĕслемелли кĕтессем йĕркеленĕ.

Кăçалхи тăватă уйăх хушшинче районти ĕççыннисем 153.750 тенкĕ выляв укçи илнĕ.

Г. АЛЕКСЕЕВ.

Юрă праçникĕ умĕн

Пире Сталин ырлăх пачĕ

Сăмахĕсем В. Урдашăн. Музыки Ф. Лукинăн.



Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Уй-хирпе иртес пулсан,
Ылттăн çăлтăрлă мухтавлă
Ĕç геройсене куран.

Хушса юрламалли:

Çилĕ вĕрĕ кассăн-кассăн,
Юрă юхĕ таврана.
Тăвансем, сума сусассăн
Килсе курăр хăнана.

Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Хапхинчен кĕрес пулсан,

Чĕнтĕрленĕ, ярапаллă
Çĕнĕ çуртсене куран.

Хушса юрламалли:

Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Вăйăнне тухас пулсан,
Ĕçри паттăр, пултарулла
Çамрăк-хĕреме куран.

Хушса юрламалли.

Пире Сталин ырлăх панă,
Колхозра телей кăна.
Эй, çĕклен, çĕклен вăй-халăм,
Чыс, мухтав, çулпуç сана!

Хушса юрламалли.

Агроном канашĕ

Вир акса тăвасси

Чăваш республикин Атăл тăрăхĕнчи районĕсенче вире колхозсем организацилемĕ хысçăн кăна акса тума пуçланă. Унччен, пирĕн тавралри кĕллĕ тăпра çинче вир пулмасть тесе, ăна пачах акса туман. Халĕ ĕнтĕ нумай колхозсем пысăк тухăçлă вир туса илме вĕренчĕç. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз гектартан 43-шер центнер вир пухса кĕртнĕ. Шупашкар районĕнчи государствăн сортсем сăнакан участокĕнче эпир иртнĕ çулта кашни гектартан 35-шер центнер вир пухса кĕртрĕмĕр.

Ытти пĕрчĕллĕ тыррĕсемпе танлаштарсан, вирĕн уйрăмлăхĕсем çаксем пулассĕ: вăл ÿр типĕ çантаплăхран хăрамасть, пачах урăхла: ăшша, хĕвеле юратакан тырă пулса тăрать. Çавăнпа ăна тăпра ăшăнса çитсен тин акассĕ. Ирттерех аксан, вăл сивĕ тăпрара час шăтса тухма пултараймасть, йĕркеллĕ шăтса тухма ăна тăпра 10 сантиметр тарăнăшĕнче 10—12 градуса çити ăшăнса çитни кирлĕ.

Шăтса тухсан та вир малтанхи уйăх хушшинче питĕ начар ÿсет, унăн пуçламăш тымарĕ те питĕ начар. Çавăнпа та вире удобренисемпе лайăххăн çемçетнĕ вырăнсене акмалла. Пусă çаврăнăшпе йĕркелесе çитернĕ колхозсенче вире клевер хысçăн акассĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз пысăк тухăçлă вире иртнĕ çулта çĕрем уçса акнă вырăнта туса илнĕ.

Эпир вире çапла ĕçлесе пысăк тухăçлă ÿстерсе илетпĕр. Вир-Тимофеевка икĕ çул хушши ÿснĕ пусса акатпăр. Кураk çеремне кĕркунне сентябрь уйăхĕнче предплужникпа плугпа 20—22 сантиметр тарăнăш сухаласа хăварнă. Çереме ватас умĕн унта кашни гектар пусне 5-шер центнер фосфорит çăнăхĕ сапнă.

Кĕрхи çĕртме тунă вырăна çуркунне сÿрелетпĕр. Унтан кашни гектар çине 2 центнер суперфосфат, 1 центнер аммони сульфачĕ, 0,5 центнер хлорлă калий сапатпăр. Çак удобренисене сапнă хыççăн, вир акмалли лаптăка 7—8 сантиметр тарăнăш культиваци туса кăпкалататпăр, çийĕнчех сÿрелесе хăваратпăр.

Вир акмалли вăхăт çитиччĕ çĕро пусăра çумкурăксем тухма пултарассĕ. Вĕсене пĕтерес тĕллевпе тăпрана тата тепĕр хут 4 сантиметр тарăнăш культиваци тăватпăр. Кун хыççăн тăпрана волокушăсемпе пусăрлатарса хăварнă.

Çанталăк лайăх тăрать пулсан, вир вăрлăхне сеялкăпа 3 сантиметр тарăнăшне ретсем хушшине 39—40 сантиметр хăварса акатпăр. Акнă хыççăн тăпрана катокпа пичетлесе хăварнă. Çанталăк çумăрлă тăрать, тăпра типĕ мар пулсан, тăпрана катоксемпе пичетме кирлĕ мар.

Акнă хыççăн 10—12 кунтан вир шăтса тухать. Ретсем палăрма пуçласан, вĕсен хушшине ретсене 3—4 сантиметр тарăнăш кăпкалатас пулать. Ретсем хушшине çавăн пек кăпкалатни вирĕн питĕ усăлла. Çакăн пек тунипе эпир тăпрара нÿрĕ ытларах тытса юлатпăр, çумкурăксене ÿсме чаратпăр.

Тепĕр 2—3 эрнерен вир речĕсен хушшисене татах кăпкалатас пулать. Çак ĕçе тăвас умĕн вир калчине удобренисем сапса пани кирлĕ. Эпир çак вăхăтра вир калчине гектар пусне 0,7 центнер аммиаклă селитра, 1 центнер суперфосфат тата 0,5 центнер хлорлă калий сапса паратпăр. Удобренисем сапнă хыççăн ретсем хушшине 7—8 сантиметр тарăнăш кăпкалатса хăваратпăр. Çакна тунă чухне вир çинчен çумкурăксене йăлтах кăклатпăр.

Пуç кăларичченех вире вирçĕ хутчен кăпкалатмалла, çумкурăксенчен тасатмалла. Йĕркеллĕ, лайăх шăтнă вир, çапла пăхса ÿстерсен, кăна, кĕллĕ тăпра çинче те пысăк тухăçлă пулма пултарать.

Вир тухăçлă пулассишĕн унăн сорчĕсен те нумай килет. Атăл тăрăхĕнчи кĕллĕ тăпраллă районсенче «Долинское 86» текен сортлă вир аван пулать. Вир агротехникине çÿлте каласа пек пурнăçласа пырса, эпир çак сортлă вире 1952 çулта кашни гектар çинчен 35,4 центнер пухса кĕртрĕмĕр.

Кăçал эпир вире майăн 18-мĕшĕнче акса хăвартăмăр. Иртнĕ çулта сентябрĕн 25-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тунă чухне вир акмалли вырăна фосфорит çăнăхĕ сапнă. Кĕрхи çĕртме тунă лаптăка çуркунне майăн 4-мĕшĕнче сÿрелентĕ. Сÿрелес умĕн кашни гектар çине пĕрчĕлетнĕ суперфосфат 1 центнер, аммони сульфачĕ 2 центнер, хлорлă калий 0,5 центнер сапнă. Кун хыççăн, майăн 8-мĕшĕнче, вир акмалли вырăна трактор культиваторĕсемпе 7—8 сантиметр тарăнăш кăпкалатнă, çийĕнчех сÿреленĕ.

Майăн 16-мĕшĕнче тăпрана [illegible] никсемпе 4 сантиметр тарăнăш [illegible] парахрăмăр, çийĕнчех зиг-заг [illegible] сене сÿрелерĕмĕр. Кун хыççăн вăрлăх сеялкăпа тимĕр шлейфпа тикĕслерĕмĕр те вире сеялкăсемпе сарлака ретсем хăварса акрăмăр. Кашни гектар çине 20—25 килограмм вăрлăх кĕртрĕмĕр.

Вире пăхса ÿстермелли агротехникăна пăхса та тĕплĕн пурнăçлатпăр.

С. ГРИГОРЬЕВ,
Шупашкар районĕнчи госсортоучастокăн заведующийĕ.

Çамрăксем авиаци спортне вĕренеççĕ

Авиаци ĕçне юратакан çамрăксем валли аэроклубсем уçассĕ.

Халĕ Шупашкарти аэроклубра, пилотсем, планеристсем, парашютистсем вĕрентсе хатĕрлекен уйрăмсене вĕренме илессĕ. Авиаци спортне юратакан çамрăксем заявленисем пама тытăнчĕç те ĕнтĕ.

Клуба вĕренме илес ĕçе партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем пулăшса пымасăр лайăх ирттерме çук. Çак ĕçре комсомола—сывлăш флочĕн шефĕ нумай пулăшма пултарать. Пирĕн çулсенчи пекех, кăçал та чи лайăх комсомолецсене аэроклуба вĕренме ямалла.

Халĕ аэроклубра вĕренекен çамрăксем хушшинче колхозниксем, рабочисемпе служащисем тата студентсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем вуншар çын.

Тĕслĕхрен, Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз члене Анатолий Рожкова илер. Вăл колхозра питĕ аван ĕçленĕ. Кăçалхи çуракине вăл куллен пĕр гектар таран сухалать. Çак районти «Правда» колхоз членĕ Д. Михайлов кăçал 120 ĕçкунĕ тунă. Вĕсем иккĕшĕ те пирĕн аэроклубра вĕренессĕ. Хăйсем парашютист пулма ĕмĕтленниие пурнăça кĕртрĕç. Кăçал аэроклубран вĕренсе тухнă çамрăк колхозниксен кăкри çинче вĕсем хăюллă та паттăр пулнине, авиаци спортне ăста вĕренсе çитнине кăтартакан «Парашютист» эмблемисем ялкăшассĕ.

Колхозниксемпе пĕрлех пĕрремĕш разрядри спортсмен-парашютист нормине пама пединиститут студенчĕ Владимир Яковлев, электроаппаратура заводĕнчи работницăсем Раиса Дорофеева, Алевтина Губанова тата ыттисем те хатĕрленессĕ.

Аэроклубра вĕренекен планеристсемпе летчик-спортсменсем Пĕтĕм Союзри спорт классификацийĕн çĕнĕ нормисене пама тата сывлăш спортсменĕсен çуллен пулакан республикăри ăмăртăвĕсене хутшăнма хатĕрленессĕ.

Аэроклуб—авиаци спортне юратакансене вĕренÿ организацийĕ. Кунта çамрăксем производстварăн уйрăлмасăр вĕренсе пĕлĕвĕ илессĕ. Авиаци спортне юратакан çамрăксене эпир хавасланса кĕтетпĕр.

ДОСААФ организацийĕсен членĕсем, çамрăксем, комсомолецсемпе комсомолкăсем, аэроклуба вĕренме кĕрĕр!

В. КУДРЯШОВ,
Республикăри аэроклуб начальникĕн заместителĕ.

Рабочисен çуллахи канăвĕ

ÇĔРПУ. Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ С. Ильин юлташ Çĕрпÿри пир-авăр фабрикинче электрик пулса ĕçлет. Фабрикăри профсоюз комитечĕ С. Ильин юлташа государство страхованийĕ шучĕпе санатори яма йышăнчĕ. Çак кунсенче вăл Кăнтăр енчи санатори каять.

Ку фабрикăри вунпар рабочисене работницăсем, служащисем çуллех отпуск кунĕсене канмалли çуртсенче, санаторисемпе курортсенче ирттерессĕ. П. Еремеева ткачиха иртнĕ çулсенче Сочири тата Кисловодскри санаторисенче каннă, кăçал вăл каллех Крымри санаторие каять.

Июнь уйăхĕнчен пуçласа çак фабрикăран 20 çын Ильинкăри канмалли çурта, 5 çын курортсемпе санаторисене каяссĕ.

Профсоюз комитечĕ рабочисен ачисемшĕн те тăрăшать. 20 ачана пионерсен лагерĕсене яма путевкăсем туянассĕ.

Т. ФЕДОРОВА.

Промышленность предприятийĕсене ĕçleме каяççĕ

ЭЛĔК. Юлашки вăхăтра çĕршыври тĕрлĕ пысăк стройкăсене ĕçleме каякан колхозниксен йышĕ чылай ÿсрĕ. Иртнĕ тăватă уйăх хушшинче 123 çын промышленноçа ĕçleме кайнă. Вĕсем вырăна лайăх çитсе вырнаçни, ĕçleме пуçлани çинчен çыраççĕ.

Энгельс ячĕпе тăракан колхозран кайнă М. Герасимова, Л. Лазарева юлташсем Свердловск хулинчен çапла çыраççĕ:

«Пире кунта ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Ситсенех лайăх хваттер, выртса тăмаллисем пачĕç. Халĕ эпир питĕ лайăх пурăнатпăр. Ĕç укçи çителĕклĕ. Канмалли вăхăта лайăх ирттерме условисем пур».

Омск хулине ĕçleме кайнă Н. Елисеев, Г. Ефимов, С. Федоров колхозниксем грузчиксем пулса ĕçлессĕ, ĕç укçи çителĕклĕ илессĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхозран кайнă Г. Шалагин колхозник Вологда облаçĕнчи Череповец хулинчен çапла çырать:

«Хальхи вăхăтра эпĕ строительствăра бригадир пулса ĕçлетĕп. Бригадăра пурĕ тăхăр çын. Эпир нормăсене тÿрех тултаратпăр. Вĕсем хастарлă ĕçлессĕ, кашниех уйăхра 800—850 тенкĕ ĕçлесе илессĕ. Çемьепе пурăнма уйрăм хваттер пачĕç. Эпĕ кунта ялхалăхах пурăнма тата ĕçleме юлатăп».

Çак кунсенче районти колхозсенчен тата 19 колхозник Чкалов облаçне ĕçleме кайрĕ.

А. ОРЛОВ.

Вылăх-чĕрлĕхе кĕтÿре çÿретмесĕр пăхса усрасси

Партин XIX-мĕш съезчĕ Совет Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пилĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче çапла каланă: «Колхозсемпе совхозсенче майракалла шутра вылăхăн сĕт тухăçлăхне ÿстерме вылăх-чĕрлĕх хуçалăхне тытса пырас ĕçри ытларах интенсивлă системăна—уйрăмлăхсене кура, вылăха кĕтÿре çÿретмесĕр пăхса усрамалли системăна малалла пурнăça кĕртсе пырассине уйрăмах кирлĕ тесе шутламалла».

Мĕнпур апатсенчен симĕс апат пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку вăл, В. Р. Вильямс калама тăрăх, пĕртен-пĕр чи лайăх апат шутланать. В. Р. Вильямс çапла каланă: «Вылăх-чĕрлĕх валли хăçан çителĕклĕ апат хатĕрлетĕн, çавăн чухне продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕçлесе организациллеме пулать». Çак задачăна пурнăçлас ĕçре симĕс конвейерпа усă курса, вылăх-чĕрлĕхе кĕтÿре çÿретмесĕр пăхса усрасси пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Савна эпир Чăвашсен Государство селекци станцийĕнче, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» тата ытти колхозсенче те куратпăр. Чăвашсен Государство селекци станцийĕнче пăхса тăракан вылăх-чĕрлĕхе çуллахи вăхăтра кĕтÿре çÿретмесĕр пăхса усраççĕ. Сăмахран, вăл ĕне вылăха кашни çулла Савал шывĕ хĕрринчи кĕтÿ çÿремелли вырăнсене çÿретет. Кунта тĕрлĕ ушăкăн вылăх-чĕрлĕх валли лупасасем тунă, участоксем уйăрса панă, тин çуралнă пăрусене уйăрса хупмалли вырăнсем тунă, фермăра ĕçлекенсем пÿртсем тусса лартнă.

Кунта лагерь таврашĕнчи çĕр участокĕпе кĕтÿ çÿретсе тата курăксем акса хатĕрленĕ. Акнă курăксене çулса вылăх-чĕрлĕхе парассĕ. Акасса тĕрлĕ курăксем тата тĕрлĕ срокесене акассĕ. Кун пек аксан, вылăх-чĕрлĕх ялан çамрăк та сĕтеклĕ курăк çиме пултарать.

Ку станцинче вылăхсем валли августа уйăхĕнче ыраш акса хăварассĕ. Суркунне ыраш калчине вылăх-чĕрлĕхе çулса çитерессĕ. Июнь уйăхĕнче нумай çул ÿсекен курăксем, июнĕ август уйăхĕ хушшинче вылăха викăпа сĕлĕ калчи çулса параççĕ. Августăн 1-мĕшĕнче сентябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче нумай çул ÿсекен курăксен кавăкне, сентябрĕн 15-мĕшĕнче вара—кĕрхи ыраш калчипе тăрантарассĕ.

Станци колхозсене уйрăмах ыраш акма сĕнет. Ытти культурăсем ÿсce çитеиччен чухне ăна пур вылăх-чĕрлĕхе те çулса пама юрать. Вылăх-чĕрлĕх çисе ярайман ыраш калчинчен ыраш та туса илме пулать. Ыраш калчине çуркунне те курăк пирки, кураk ÿссе çитмен çеремсем çине вылăх-чĕрлĕхе кăларса çитерессĕ. Вылăх-чĕрлĕхе хытарсан сыхлаха хăварма пулăшать. Вылăх-чĕрлĕхе тăрантарас, пăхса усрас ĕçе лайăх йĕркеленипе селекци станцинче вылăх-чĕрлĕх валли тата унăн тухăçлăхĕ ÿсме тăрать. Сăмахран, 1952 çулта кашни ĕне кунсерен вăтам шутпа 4.110 килограмм сĕт суса илнĕ, кашни сысна аминчен 17,2 çура илнĕ. Çак çурасем икĕ уйăхра вăтам шутпа 14-шар килограмм тайнă. Государствăна вылăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана иртерсе тултарнă. Ольга Митрофанова доярка кашни ĕнерен вăтам шутпа 4.705-шер килограмм сĕт суса илнĕ. Антонина Максимова свинарка кашни сысна аминчен 17,6-шар çура илсе ÿстернĕ. Александра Харитонова свинарка самăртма уйăрнă сыснасен вис ине куллен 700—1.400 грамм ÿстерсе пынă.

Ĕнесене çуллахи вăхăтра лагерьсенче пăхса усрас ĕçе Етĕрне районĕнчи Буденнăй ячĕпе тăракан, Советски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем, Красноармейски районĕнчи «Красное Сормово» колхозра лайăх организациленĕ. Çак колхозсем лагерьсенче пăхса усранă чухне те, ĕнесенчен сĕт нумайрах суса илес тесе, ĕнесене апат хушса парассĕ. Суркуннехи уйăхсенче, курăк вăйлă шăтса тухман чухне, сăвакан ĕнесене вылăха çитерме ятарласа акнă ыраш калчи хушса пара тăрантарассĕ, каярахпа вылăха урăх апатсем—клевер, тымарçимĕçсем, силос парассĕ. Çапла вара колхозсем тăрăшса ĕçленипе пула вылăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ нумай ÿснĕ. Сăмахран, Буденный ячĕпе тăракан колхозра 1952 çулта фермăри ĕнесенчен кашнинчен вăтам шутпа 2.301 килограмм сĕт суса илнĕ. Çак колхозри доярка А. С. Селиванова хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 2.481-шер килограмм сĕт суса илнĕ. Сурăх фермине ĕçлекен шефмаçăр Н. Крынецкий лайăх ĕçленине пула, кашни сурăхран 4,65 килограмм çăм касса илнĕ.

Вылăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăха ÿстерес ĕçре симĕс конвейер пысăк усă панине эпир Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозăн тĕслĕхĕнчен те куратпăр. Çак колхозра 1951 çулта симĕс конвейер организациленĕ. Çакна пула кунта ĕнесене çуркуннепе çуллахи вăхăтра вылăх-чĕрлĕхе симĕс курăк çулса парассĕ тата ытти сĕтеклĕ апатсем çителĕклĕ çитерессĕ. Çак колхозра 146 гектар çинче вылăх апачĕ акса тумалли 8 уйлă пусă çаврăнăшне тата 994 гектар çинче 10 уйлă пусă çаврăнăшĕ тунă, унта нумай çул ÿсекен курăксем акассĕ.

«Гвардеец» колхоза вылăх апачĕ акса тума ятарласа бригада организациленĕ. Бригада çумне туртăм вăйĕ, ялхуçалăх машинисем тата ĕç хатĕрĕсем, çавăн пекех тата транспорт çирĕплетсе панă. Колхозра симĕс апатлăх кĕрхи ыраш, нумай çул ÿсекен курăксем (клевер, люцерна, тимофеевка) акса тăвассĕ. Кунсăр пусне кунта тымарçимĕçсем нумай акса тăвассĕ. «Гвардеец» колхоз нумай çул ÿсекен курăксем тымарçимĕçсем акрăх туниспе пусне вылăх апачĕлĕх çурнапа, могар курăкне те акса тăвать. Суданка курăкне те утăлăх, силослăх, симĕс апатлăх акса тăвассĕ. Вăл кĕске вăхăтра ÿссе çитет, ăна çу каçиччен виçĕ хут çулса вылăхсене çитерме юрать. Унăн симĕс масси пĕр гектартан 287 центнер пулать.

Ку колхозра могар курăкĕ те пысăк тухăçлă пулать. Унăн тухăçĕ викăпа сĕлĕ тухăçĕпе пĕрех, гектартан 120 центнер тухать. Ăна ĕне вылăх, çамрăк лашасем лайăх çиессĕ. Могар калчи кĕçеленме тытăнсан, ăна çулса вылăх-чĕрлĕхе çитерессĕ.

Колхозра викăпа сĕлĕ симĕс апатлăх акса çитени. Çак культурăсен акасси çултан-çул ÿстерсе пырассĕ. Сăмахран, 1940 çулта 30 тонна силос хывнă пулсан, 1952 çулта 500 тонна хывнă. Силос хывас ĕçе механизациленĕ. Силос хывма çурма башнясем туса хатĕрленĕ.

Симĕс конвейера мĕнле организацилемелле-ха?

Симĕс курăксен конвейерне организацилес ĕçре вылăх апачĕсем валли курăксем акса тумалли участоксем тата ферма çумĕнчи пусă çаврăнăшĕсем пысăк вырăн йышăнса тăрассĕ. Пусă çаврăнăшĕнче симĕс апат валли кирлĕ культурăсем акассĕ.

Симĕс конвейер валли пĕр çул ÿсекен курăксем кĕтÿ çÿретмелли вырăнсенче курăк сахал пулнă чухне, çавăн пекех тата нумай çул ÿсекен курăксем ÿссе çитмен вăхăтра вылăх-чĕрлĕхсене çитермешкĕн акассĕ. Пĕр çул ÿсекен курăксемпе ытларах усă курас тесе, вĕсене пĕр çул хушшинче икĕ срокра е виçĕ срокра акма юрать.

Пĕр çул ÿсекен курăксемпе çак вăхăтсенче усă курма тытăнассĕ: пучахлă курăксемпе—кĕпçелеме тытăнсан, пăрçа йышши курăксемпе—чечеке ларма пуçланă вăхăтра.

Вылăхсене симĕс апатпа тăрантарас ĕçре курăксен кавăкне те усă курассĕ. Пĕр çул ÿсекен хăшпĕр курăксем каçинчен иккĕмĕш хут ÿсет. Пĕрремĕш кавăва, акнă курăксене пĕрремĕш хут çитерме тытăннă хыççăн 15—25 кун иртсен, каю вăрăмĕшне кура, вылăхсене çитерме çулса пуçлассĕ. Иккĕмĕш хут вара çу вĕçĕнче тин çулса илме юрать.

Кашни колхозра кĕтÿ çÿретмелли вырăнсенчи курăк хăçан çитменнине тата акнă курăксене хăçан çулса çитерме кăтартса плане çырса хурассĕ. Çак планта хăш вăхăтра кĕтÿ çумне мĕнле çĕр участокĕ çирĕплетнине тата вĕсен участоксен пысăкăшне номерĕсене, унта вылăх-чĕрлĕх валли пулмалли курăк ĕçсем акса хăварнине, симĕс конвейер валли мĕнле курăк пулмаллине, çулса илнĕ курăк каюсĕсене, хăш участокра курăк чухлĕ ÿсремеллине кăтартассĕ.

Апат базине çирĕплетессишĕн тăрăшасси кашни колхоз правленийĕн тĕп задачи пулмалла. Вылăх апачĕн çирĕп базине тăвасси обществолла вылăх-чĕрлĕхе ĕçлесе ĕçе малалла аталантарса ямалли тĕп услови пулса тăрать.

А. МИТРОФАНОВА.

Çĕнĕ клуб пулать

Колхозниксен культура шайĕ çултан-çул ÿссе пырать. Халĕ Киров ячĕпе тăракан колхоз 400 çын вырнаçмалăх стандартлă çĕнĕ клуб тăвать. Клуб тунă çĕрте 15 çын ĕçлет. Бригадăна опытлă колхозник Я. Васильев ертсе пырать. Кунта уйрăмах Н. Барабанова П. Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлессĕ. Халĕ клуб çуртне хăпартса çитернĕ. Ака тырă вырма тухиччен çурта пĕтерме тăрăшассĕ.

Г. ПАВЛОВ.

Вăрнар районĕ.



Венгри Халӑх Республикинчи пӗррремӗш социализмла хулара — Сталинварош хулинче металлурги комбиначӗ тӑваҫҫӗ. И. В. Сталин ячӗпе тӑракан ҫӗнӗ металлурги комбиначӗ хӑвӑрт ӳссе пырать.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Сталинварош хулинчи И. В. Сталин ячӗпе тӑракан металлурги комбиначӗн строительствин пӗр участокӗ.

«МАДЬЯР ФОТО» фотоӳкерчӗкӗ.

Чехословакире карточкӑсен системине пӑрахӑҫа кӑларнӑ тата укҫа-тенкӗ реформи ирттернӗ

ПРАГА, майӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Чехословаки правительствипе Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ 1953 ҫулхи июнӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсене карточка тӑрӑх сутассине пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен тата укҫа-тенкӗ реформи ирттересси ҫинчен закон проекчӗ йышӑннӑ. Паян Наци пухӑвӗ хӑйӗн ларӑвӗнче ҫак закона пӗр шухӑшлӑ пулса ырланӑ.

Ҫӗнӗ закон тӑрӑх, июнӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа карточка системи пӑрахӑҫа тухать, апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен ваккӑн сутмалли пӗрлӗхлӗ хаксем пулаҫҫӗ. Ҫапла тунипе норма тӑрӑх сутакан таварсен хакӗпе коммерчески таварсен хакӗ хушшинчи уйрӑмлӑх пӗтет. Пӗрлӗхлӗ хаксем коммерчески хаксенчен чылай пӗчӗкрех, нормӑсем тӑрӑх сутакан таварсен хакӗнчен пӑртак ҫӳҫ пысӑкрах пулаҫҫӗ. Крона хакӗ ӳсет, ҫапла вара рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫи те ӳсет. Ҫавӑн пекех пӗрлӗхлӗ ялхуҫалӑх кооперативӗсен членӗсемпе уйрӑм хуҫалӑхлӑ хресченсен тупӑшӗ те ӳсет.

Июнӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа Чехословаки кронине ылтӑн тӑрӑх шутлама пуҫлаҫҫӗ. Вӑл, чи тӗреклӗ валютӑн—совет укҫин хакӗпе танлаштарсан, 10 тенкӗ пусне 18 крона тӑракан пулать.

Ҫӗнӗ закон тӑрӑх, кивӗ укҫасене ҫӗнӗ укҫапа улӑштараҫҫӗ.

ПРАГА, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Чехословакири хаҫатсем карточка системине пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен тата укҫа-тенкӗ реформи ирттересси ҫинчен кӑларнӑ закон текстне пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫатсенче ҫавӑн пекех укҫа-тенкӗ реформи ирттермелли йӗрке ҫинчен финанс министрӗ кӑларнӑ директивӑна, ҫӗнӗ укҫасен ӳкерчӗкӗсене тата шалти суту-илӳ министрӗ апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен ҫӗнӗ хакӗсем ҫинчен кӑларнӑ приказа пичетленӗ.

«Руде право» хаҫат «Укҫа-тенкӗ реформи тата карточка системине пӑрахӑҫа кӑларни—хамӑр хуҫалӑха малалла аталантармалли ҫул-йӗр» ятлӑ умстатьяра ҫапла ҫырать: укҫа-тенкӗ реформи ирттерни тата карточка системине пӑрахӑҫа кӑлармалла туни пирӗн ҫӗршывӑн пысӑк ырӑн йышӑнса тӑрать. Чехословаки халӑхӗне пӗтӗм хуҫалӑхшӑн ҫирӗп крона пулса тӑчӗ, ӑна ылтӑн хакӗпе шутлаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫӗршывра 14 ҫула яхӑн пынӑ карточка системине пӗтӗмпех пӑрахӑҫа кӑлараҫҫӗ.

Ҫакӑн пек пысӑк ӗҫсем туса ирттерме Чехословаки рабочи класӗпе мӗнпур ӗҫҫыннисем паттӑррӑн тӑрӑшса ӗҫленипе, Совет Союзӗ ялан тӑванла пулӑшнипе кӑна май килнӗ.

Укҫа-тенкӗ реформи ирттерни тата карточка системине пӑрахӑҫа кӑлармалла туни, тесе ҫырать юлашкинчен хаҫат, малалла пыма анлӑ ҫул уҫса пачӗ, ӗҫҫыннисен материальнӑй пурнӑҫӗпе культурӑллӑ шайне малалла ӳстерме кирлӗ майсем туса пачӗ.

Будапештра марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсен выставки уҫӑлнӑ

БУДАПЕШТ, майӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Будапештри совет кӗнекин ҫурчӗ тата вырӑс кӗнекин М. Горький ячӗпе тӑракан библиотеки марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсен выставкине организациленӗ. Выставкӑра вырӑсла, венгрла, французла, нимӗҫле, китайла кӑларнӑ кӗнекесем нумай.

Венгрире марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсене илекенсен йышӗ пӗрмаях ӳссе пырать. Пӗлтӗр марксизм-ленинизм классикӗсен 37 произведенине пичетлесе кӑларнӑ. Ҫак кӗнекесен тиражӗ 1.432.100 экземпляра ҫитнӗ. Ҫӗршыва ирӗке кӑларнӑранпа марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсене пурӗ 9 миллион экземпляра яхӑн пичетлесе кӑларнӑ. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тата «Ленинизм ыйтӑвӗсене» ҫичшер хут пичетлесе кӑларнӑ.

Албанире парти вӗренӗвӗн ҫулӗ вӗҫленет

ТИРАНА, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Парти вӗренӗвӗн ҫулӗ вӗҫленсе пырать. Кӑҫал парти вӗренӗвӗн тӗрлӗ кружокӗсемпе шкулӗсенче 20.377 коммунист тата партире тӑманнисем 8.169 ҫын вӗреннӗ. Ялти шкулсемпе кружоксенче вӗренекенсем хушшинче вӗреннӗ материалсем тӑрӑх калаҫусем пулса иртнӗ те ӗнтӗ. Халӗ итоглӑ занятисем хуласенчи шкулсемпе кружоксенче вӗренекенсем. Хушшинче пуҫланаҫҫӗ. Итоглӑ калаҫусем вӗренекенсем материала лайӑх ӑнланнине кӑтартса параҫҫӗ. Коммунистсен идейӑлла шайӗ ӳснӗ. Ҫакӑ вӑл вӗсен политикӑлла активлӑхне тата ӗҫри хастарлӑхне ӳстерме пулӑшнӑ.

Пуҫламӑш парторганизацисемпе парткабинетсем вӗренекенсем валли халӗ уйрӑм темӑсем тӑрӑх лекцисемпе консультацисем организацилеҫҫӗ.

Ялти шкулсемпе кружоксенче 10.434 коммунист вӗреннӗ. Вӑл иртнӗ ҫулхинчен 60 процент ытларах пулать.

Политшкулсемпе кружоксен шучӗ, иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчипе танлаштарсан, 28 процент ӳснӗ.

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче марксизм-ленинизм университетӗнче ӗҫлеме пуҫланӑ.

Болгарире вырӑс чӗлхине вӗренеҫҫӗ

СОФИЯ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Болгари Халӑх Республикинче вырӑс чӗлхине вӗрентекен курссенче вӗренӳ ҫулӗ вӗҫленет. Кӑҫал София хулинче вырӑс чӗлхине вӗрентекен курссем 1.134 пулнӑ. Вӗсенче 14.391 ҫын вӗренет.

Майӑн 25-мӗшӗнче Хасков округӗнче 215 курс хӑйсен ӗҫне вӗҫленӗ. Вӑл курссенче кӑҫал 3.300 ҫын вӗреннӗ.

Габрово хулинче кружоксемпе занятисем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн, преподавательсемпе вӗренекенсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Вӗренекенсем нумайӑшӗ кружоксенче вӗренни хӑйсене вырӑс литературине вырӑсла вулама пулӑшни ҫинчен каласа панӑ.

Ҫӗршер рабочисем, совет кӗнекисене вуласа, Совет Союзӗнчи малта пыракансен меслечӗсемпе паллашаҫҫӗ, вӗсемпе ӗҫре усӑ кураҫҫӗ.

Шанхайра ачасен дворецӗ уҫнӑ

ШАНХАЙ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Шанхайра ачасен дворецне уҫнӑ. Шурӑ мрамортан тунӑ дворец тӗлӗнмелле чаплӑ паркра вырнаҫнӑ. Малашне ӗнтӗ ҫак дворецӑн чӑн-чӑн хуҫисем ачасем пулса тӑраҫҫӗ. Дворец—хулари чи лайӑх ҫуртсенчен пӗри. Ӗлӗк ку ҫуртра ют ҫӗршывсенчен килнӗ пуянсем хӑйсен вӑхӑтне саванӑҫлӑн ирттернӗ.

Дворец ачасен талантӗсене ӳстерме пулӑшас, ачасем хушшинче культурӑллӑ массӑллӑ ӗҫсем ирттермелли центр пулса тӑрас тӗллев тытать. Ҫак задачӑна пурнӑҫлама кунта мӗнпур условисене туса панӑ. Дворец библиотекинче вуншар пин кӗнеке шутланать. Вуламалли залсем нумай. Кружок занятийӗсем ирттерме ятарласа пӳлӗмсем уйӑрнӑ. Киносем тата спектакльсем кӑтартма 600 ҫын вырнаҫмалӑх зал пур. Дворецра квалификациллӗ руководительсемпе воспитательсем ӗҫлеҫҫӗ.

БРАЗИЛИРЕ ТАВАР ХАКЕ ӲСЕТ

МОНТЕВИДЕО, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Бразилире тухса тӑракан «Импренса популар» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, снабжени енӗпе тата таварсен хакне палӑртас енӗпе ӗҫлекен федеральнӑй комисси ҫӑкӑр хакне Рио-де-Жанейро хулинче 14 процент, Сан-Пауло хулинче 12 процент ӳстерме решени йышӑннӑ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ майӑн 30-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче Корея Халӑх ҫарӗпе Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсем Кымсонран хӗвелтухӑҫнерех тата Коранпхорирен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерех тӑшманӑн 2 батальонӗне хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Тӑшман 10 хут ытла Халӑх ҫарӗн позицийӗсем ҫине атака тунӑ, анчах унӑн, пысӑк ҫухатусем тӳссе, каялла чакмалла пулнӑ.

Америка самолечӗсем ӗнер ҫӗрле каллех Ранам водохранилищин пӗви ҫине тапӑннӑ, бомбӑсем нумай пӑрахнӑ.

Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем паян тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ, 3 самолетне сиенленӗ.

ПХЕНЬЯН, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян пӗлтернинче ҫапла каланӑ: иртнӗ кун хушшинче Халӑх ҫарӗпе Китай добровольцӗсен чаҫӗсем Пенамдон районӗнче тӑшманӑ хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫнӑ.

Ӗнер ҫӗрле Америка авиацийӗ Саривонь хули ҫывӑхӗнчи ялсем ҫине каллех бомбӑсем пӑрахнӑ.

Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем паян тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ, 2 самолетне сиенленӗ.

Америка авиацийӗ Корейӑри мирлӗ хуласемпе ялсем ҫине ҫапла бомбӑсем пӑрахать

ПХЕНЬЯН, майӑн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Америка авиацийӗ Ҫурҫӗр Корейӑри мирлӗ хуласемпе ялсем ҫине ҫапла тапӑнать. Корейӑри тӗп телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, майӑн 26-мӗшӗнче Америка самолечӗсем Вонсан хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Хулари мирлӗ халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, темиҫе вуншар землянкӑна ишӗлтернӗ.

Майӑн 27-мӗшӗнче ирхине Вонсан хули ҫине Америка ҫар карапӗсем ҫинчен артиллерирен хытӑ персе тӑнӑ. Хула ҫывӑхӗнчи вырӑнсем ҫине Америка самолечӗсем тапӑннӑ. Ҫав кунхинех Вонсан хули ҫине Америка авиацийӗ тата 5 хутчен бомбӑсем пӑрахнӑ. Хулана нумай ишӗлтернӗ, мирлӗ халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Корейӑра перемири ҫинчен пыракан калаҫусем пирки

ПЕКИН, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Корейӑпа Китай делегацийӗ ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ:

Майӑн 31-мӗшӗнче Корейӑра Китай делегацийӗн пуҫлӑхӗ генерал Нам Ир ҫыхӑну тытакан главнӑй офицер урлӑ тепӗр енне икӗ енӗн делегацийӗсен ларӑвӗ пуҫланассине тата тепӗр висӗ куна кая хӑварма сӗннӗ. Ҫапла вара, калаҫусем июнӗн 4-мӗшӗнче ирхине 11 сехетре пуҫланмалла пулать. Тепӗр енӗн ҫыхӑну тытакан главнӑй офицерӗ, хӑйӗн делегацийӗн пуҫлӑхӗ хушнипе, ҫак сӗнӳпе килӗшнӗ.

ПУСАНРА ТЫТКӐНРИ ҪАР ҪЫННИНЕ ВӖЛЕРНӖ

ПЕКИН, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ: майӑн 28-мӗшӗнче Пусанри тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗнче американецсем тата тепӗр тыткӑнри ҫар ҫыннине тискеррӗн вӗлернӗ.

Миршӗн, пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатассишӗн

ПАРИЖ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаҫат Алжирти ӗҫҫыннисем миршӗн, хӑйсен экономикӑлла ыйтӑвӗсене тивӗҫтермелле тӑвассишӗн активлӑн кӗрешни ҫинчен пӗлтерет. Майӑн 26-мӗшӗнче Алжир хулинчи докерсем Индо-Китая тухса кайма хатӗрленекен «Азюэро» пӑрахут ҫине груз тиеме килӗшмен. Ҫав кунхинех Оран хулинчи докерсем Индо-Китая тухса кайма хатӗрленекен «Атос» пӑрахут ҫине груз тиеме килӗшмен. Унччен маларах вӗсем «Брест» пӑрахут ҫине груз тиессине хирӗҫ пулнӑ.

Майӑн 27-мӗшӗнче Пӗтӗм Францири ӗҫлев конфедерацине кӗрекен Алжирти профсоюзсен пӗрлешӗвӗ чӗннипе Алжир, Оран тата ытти хуласенче забастовкӑсем пулнӑ. Забастовкӑсене чугун ҫул работникӗсем, трамвай работникӗсем, больницӑсенче ӗҫлекенсем 20 пин ҫынна яхӑн хутшӑннӑ. Забастовка тӑвакансем ӗҫ укҫи ӳстерме, коллективлӑ договорсем тӑрӑх аслӑ комисси канашлӑвне пухма, Алжирти ӗҫҫыннисен профсоюз прависене хисеплемелле туma ыйтнӑ.

«Юманите» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, Алжирти профсоюзсен пӗрлешӗвӗ кӑларса тӑратнӑ требованисене «Форс увриер» профсоюз членӗсемпе католикла профсоюз членӗсем те йышӑннӑ.

«Форс увриер» профсоюз организацийӗн сылтӑм лидерӗсем раскольникла политика тытнине хирӗҫлесе, Алжирти нумай ӗҫҫыннисем ҫак профсоюзран тухнӑ.

Нумаях пулмасть Алжир, Константин, Оран департаменчӗсенчи электростанцисемпе газ завочӗсенче ӗҫлекенсем 24 сехетлӗхе забастовка ирттернӗ. Забастовкӑна 5 пин ҫын хутшӑннӑ.

Индо-Китай валютипе спекуляци туни камшӑн усӑллӑ

ПАРИЖ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Индо-Китай валютипе (пиастрпа) спекуляци тунӑ пирки Парижра тухса тӑракан хаҫатсем нумай ҫыраҫҫӗ. Ҫак спекуляцие Францири политикӑлла паллӑ деятельсемпе ҫар деятелӗсем нумайӑшӗ хутшӑннӑ. Анчах уйрӑм ушкӑнсем ҫак ӗҫе мӗнле те пулсан пытарса хӑварасшӑн пулнӑ. 1953 ҫулхи февраль уйӑхӗнче Индо-Китая парламент комиссийӗ янӑ пулнӑ. Реакцилле ушкӑнсем ҫак комиссие Коммунистсен партийӗн представителӗсене кӗртессине пур майсемпе те хирӗҫ тӑнӑ. Комисси доклачӗ ҫинчен ку таранччен нимӗн те пӗлтермеҫҫӗ. Жак Дюкло, ҫавӑн пекех тата ытти депутатсем—компартин членӗсем Индо-Китай валютипе спекуляци тунӑ ӗҫе тӗпчесе тухма ҫӗнӗрен парламент комиссийӗ тӑвасси ҫинчен кӑларса тӑратнӑ ыйтӑва ку таранччен те татса паман.

Валютӑпа спекуляци тума Индо-Китайра хӑйӗнче те, Францире те пиастрпа франк хушшинчи хак пӗр пек пулманни май панӑ. Девальваци тӑвиччен пӗр пиастр Индо-Китайра 8 франк та 50 сантим тӑнӑ, Францире вара унӑн хакӗ 17 франка ҫитнӗ. (Халӗ, Франци правительстви йышӑннӑ тӑрӑх, пӗр пиастр 10 франк шутланать). Ҫакӑнпа усӑ курса, нумай спекуляци тунӑ та ӗнтӗ. Ку вӑл Индо-Китайра укҫа-тенкӗ системине хавшатнӑ.

Сайгонра валютӑсем улӑштарса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен управленин начальникӗ пулнӑ Жак Деспюэк «Пиастрпа спекуляци туни» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. Ҫак кӗнеке законсӑр ӗҫсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Кӗнеке авторӗ ҫырнӑ тӑрӑх, Бао Дай режимӗн правительство органӗсенчен пуҫласа Францин паллӑ деятелӗсем таран спекуляци тунӑ. Жак Деспюэк ҫырнӑ тӑрӑх, Бао Дайпа унӑн арӑмӗ спекуляциллӗ ӗҫсем тума 176.500 пин франк, Бао Дай «правительстви»—62.600 пин франк, Индо-Китайри политикӑлла тӗрлӗ деятельсем 60.200 пин франк хывнӑ.

Кӗнекере илсе кӑтартнӑ тӑрӑх, пиастрпа спекуляци тӑвас ӗҫе Францин премьер-министрӗ пулнӑ Кэй, Францин Индо-Китайри верховнӑй комиссарӗ пулнӑ Боллаэрт, министр пулнӑ, халӗ де Голль партийӗн парламентри ушкӑнӗн председателӗ пулса ӗҫлекен Дьетельм, Наци пухӑвӗн депутачӗ радикал-социалист Девин хутшӑннӑ. Сӑмах майӑн каласан, Девин спекуляци ҫинчен тӑракан ыйтӑва тӗпчесе тӗрӗслеме уйӑрнӑ парламент комиссийӗн членӗ пулнӑ.

Японие ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллантарассине хирӗҫлесе

ШАНХАЙ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Японире тухса тӑракан «Майници» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Осака хулинчи «Оги» паркӗнче митинг пулнӑ. Митингра пулнисем ҫакӑн пек требовани лартнӑ: Иосида правительствин отставкӑна тухмалла. Вӗсем Японие ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллантарассине хирӗҫ тӑнӑ. Митинга Осака хулинчи ҫамрӑксен правине хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен союз организациленӗ.

Япони ҫӗнӗрен хӗҫпӑшалланать

ШАНХАЙ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Токиоран килсе тӑракан хыпарсем Японире ҫар производстви пӗрмай вӑйланса пыни ҫинчен калаҫҫӗ. Америкӑн ҫар заказӗсене пурнӑҫланисӗр пуҫне, Япони ытти ҫӗршывсене хӗҫпӑшал тӑратакан арсенал пулса тӑрать.

«Асахи» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Японири «Мицубиси» компанийӗ Чилие 10 ҫар карапӗ (миноносецсем тата шыв айӗнче ҫӳрекен кимӗсем) тӑратас тӗлӗшпе Чилипе калаҫусем ирттерет. Ҫавӑн пекех «Син Муцибиси дзюкогио» ятлӑ пысӑк компани Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑҫ Азири ҫӗршывсене самолетсем сутма май пурри ҫинчен тӗпчесе пӗлме ятарласа уйӑрнӑ мисси яма хатӗрленет. Япони Бао Дай правительствине 50 самолет сутасси ҫинчен калаҫу ирттерет ӗнтӗ. Майӑн 29-мӗшӗнче Рейтер агентстви Францин Индо-Китайри ҫар влаҫӗсем Японирен хӗҫпӑшал нумайрах сутӑн илме килӗшни ҫинчен пӗлтернӗ.

«Асахи» хаҫат ҫапла ҫырать: Иосида правительствипе Япони монополисчӗсем ҫар заказӗсем илсе вырнаҫтарас тӗлӗшпе ятарласа «тӗп орган» туса хума йышӑннӑ. Ҫакӑн пек «орган» тума пуҫаракансенчен пӗри — «хӗҫпӑшалсем тӑвас ӗҫе пулӑшакан обществӑн» хальхи руководителӗ Такуе Годо пулса тӑрать. Вӑл иртнӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче «Ази промышленноҫне аталантарас тӗлӗшпе ӗҫлекен ассоциаци» текенскерӗн председателӗ пулнӑ.

БАСКЕТБОЛ ЕНӖПЕ ЕВРОПӐРА МАЛА ТУХМАЛЛИ ӐМӐРТУ

Майӑн 30-мӗшӗнче Мускавра арҫын командисен баскетбол енӗпе Европӑра мала тухмалли ӑмӑртӑвӗ малалла пынӑ, пурӗ 16 команда тӗл пулса вылянӑ.

Малтан Болгарипе Швейцари баскетболисчӗсем тӗл пулса вылянӑ. Болгари спортсменӗсем 77:52 шутпа Швейцари командине ҫӗнтернӗ.

Финалти вӑйӑсенче Румыни команди пӗрремӗш ҫӗнтерӳ тунӑ. Вӑл Бельги баскетболисчӗсене 60:55 шутпа ҫӗнтернӗ.

Чехословакипе Израиль командисем хушшинчи ӑмӑрту уйрӑмах вӑйлӑн пулса иртнӗ. Вӑйӑ пынӑ хушӑра икӗ енӗн те темиҫе хутчен очкосем пӗр пек пулнӑ. Вӑйӑ Израиль команди 59:53 шутпа ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Франци баскетболисчӗсем Югослави командине 56:39 шутпа ҫӗнтернӗ.

Италипе Египет баскетболисчӗсем хушшинче вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫланнӑ. Финалти малтанхи вӑйӑсенче икӗ команди те иккӗшер хут поражени тӳснӗ пулнӑ. Египет команди хытӑ тӑрӑшса вӑйя ӑнӑҫлӑ вӗҫлеме пултарнӑ. Вӑл Франци командине 60:51 шутпа ҫӗнтернӗ.

Нимӗҫ баскетболисчӗсем Дани командине ҫӗнтернӗ. Вӑйӑ Германи команди 51:31 шутпа ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Ливан спортсменӗсем Швеци командине 76:43 шутпа ҫӗнтернӗ.

Юлашкинчен совет баскетболисчӗсемпе Венгри баскетболисчӗсем тӗл пулса вылянӑ. Ӑмӑрту пуҫланнӑ хыҫҫӑн 10 минут иртнӗ тӗле шут 11:11 пулнӑ. Малалла икӗ команди те асӑрханса выляма пуҫланӑ. Вӑйӑн малтанхи пайӗ совет баскетболисчӗсем 24:22 шутпа ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Ӑмӑртӑвӑн иккӗмӗш пайӗнче совет спортсменӗсем атака тума пуҫланӑ. Часах Совет Союзӗпе Венгри команди хушшинчи вӑйӑ шучӗ 28:23 пулса тӑнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Венгри спортсменӗсем хӑйсен зонине хӳтӗлеме тытӑнаҫҫӗ. Вӑйӑ Совет Союзӗн команди 29:24 шутпа ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ. (ТАСС).

Майӑн 31-мӗшӗнче ӑмӑрту малалла пынӑ. Пӗрремӗш вырӑнган пуҫласа саккӑрмӗш вырӑна ситичченхи вырӑнсене илессишӗн ӑмӑртакан вӑйлӑ командӑсен тата виҫшер хут тӗл пулса кӑна вылямалла.

Майӑн 31-мӗшӗнче пилӗк вӑйӑ пулнӑ. Чехословакипе Франци командисем хушшинчи вӑйӑ сивӗччӗн иртнӗ. Чехословаки команди 55:43 шутпа Франци командине ҫӗнтернӗ.

Югослави командипе тӗл пулнӑ чухне Венгри спортсменӗсем аван вылянӑ. Ӑмӑрту сивӗччӗн иртнӗ. Венгри команди Югослави командине 69:51 шутпа ҫӗнтернӗ. Финалти вӑйӑсенче Югослави команди виҫҫӗмӗш хут поражени тӳснӗ ӗнтӗ.

Площадка ҫинче—Совет Союзӗпе Итали командисем. Малтанхи минутсенче икӗ енӗ те атакӑсем тӑваҫҫӗ. Шут ӳссе пырать, вӑййӑн малтанхи пайӗнче Совет Союзӗн команди 38:29 шутпа мала тухать.

Вӑййӑн иккӗмӗш пайӗнче СССР командин тренерӗ К. Травин спортсменсен тӗп йышне ҫамрӑк спортсменсемпе улӑштарать. О. Коркия, А. Конев, Г. Силлиньш тата ыттисем вырӑнне площадка ҫине В. Власов, Л. Решетников, А. Алачачян тухаҫҫӗ.

Итали команди пуринчен ытла А. Калеботтӑна выляттарма тӑрӑшать. А. Калеботта ҫӳлӗшӗ—2 метр та 2 сантиметр. Вӑл, хӑй ҫӳлӗ пулнипе усӑ курса, ҫӳле ывӑтнӑ мечкӑна корзинӑна кӗртсе ӳкерет. Итали команди пухнӑ 54 очкоран 17 очкона А. Калеботта выляса илнӗ. Апла пулсан та, Итали команди поражениренхӑтӑлса юлма пултарайман. Совет Союзӗн команди Итали командине 88:54 шутпа ҫӗнтернӗ. Совет спортсменӗсенчен С. Бутаутас лайӑх вылянӑ. Вӑл 21 очко выляса илнӗ.

Румыни баскетболисчӗсем Ливан спортсменӗсене 65:56 шутпа, Бельги баскетболисчӗсем Финлянди командине 59:49 шутпа ҫӗнтереҫҫӗ.

Ҫитес вӑйӑ июнӗн 2-мӗшӗнче пулать.

(ТАСС).

Совет волейболисчӗсем Францире

ПАРИЖ, майӑн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер каҫхине Париж ҫывӑхӗнчи рабочисем пурӑнакан Вильжюиф хулинче совет волейболисчӗсем вырӑнти волейбол командипе тӗл пулса вылянӑ. Тӗлпулу 3:0 (15:0, 15:0, 15:2) шутпа совет команди ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн совет волейболисчӗсен пӗрремӗшпе иккӗмӗш ушкӑнӗ кӑтартуллӑ вӑйӑ туса ирттернӗ.

ФУТБОЛ

Республика кубокне илессишӗн

Иртнӗ вырсарникун Шупашкарта, Ҫӗрпӳре тата Сӗнтӗрвӑрринче республика кубокне илессишӗн пыракан ӑмӑртӑвӑн черетлӗ вӑййисем пулса иртрӗҫ.

Шупашкарти «Молния» спорт обществин стадионӗнче икӗ вӑйӑ пулчӗ. «Искра» спорт обществин футбол команди «Труд» спорт обществин футбол командипе вылярӗ. Ҫак спорт обществисен футбол командисем футбол вӑййине республика кубокне илессишӗн пыракан ӑмӑртӑва пӗрремӗш ҫул хутшӑнаҫҫӗ. Апла пулин те, вӗсем выляннине пӑхма интереслӗ пулчӗ. Пӗрремӗш таймра икӗ команди те пӗрер мечка тапса кӗртрӗҫ. «Искра» спорт обществин футболисчӗсем иккӗмӗш таймра активлӑрах вылярӗҫ. Вӗсем тата икӗ мечка тапса кӗртрӗҫ. Вӑйӑ 3:2 шутпа «Искра» спорт обществин футбол команди ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ. Ҫапла вара «Труд» спорт обществин футбол команди республика кубокне илессишӗн пыракан малаллахи ӑмӑртуран тухса ӳкрӗ.

Каҫхине Ҫӗмӗрлери «Урожай» спорт обществин футбол команди Шупашкарти пир-авӑр комбиначӗн футбол командипе вылямаллаччӗ. Анчах физкультурӑпа спорт комитечӗ пир-авӑр комбиначӗн футбол командине вӑйӑ пуласси ҫинчен вӑхӑтра пӗлтермен пирки вӑйӑ пулмарӗ.

Каҫхине 7 сехетре Б. Блинов судья Шупашкарти «Динамо» спорт обществин футбол командипе Канашри «Локомотив» спорт обществин футбол командине вӑйя чӗнет. Ку вӑйӑ умӗн «Динамо» спорт обществин футбол команди Хӗрлӗ Чутай районӗн тата Красноармейски районӗн сборнӑй командисене пысӑк шутпа (11:0) ҫӗнтернӗччӗ. Ҫавӑнпа та динамовецсем Канашри чи лайӑх футбол командипе вылянине курма стадиона халӑх нумай пухӑннӑ.

Вӑйӑ пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Динамовецсем вӑйлӑ тапӑнса выляреҫ. Анчах пӗрремӗш мечка канашсем тапса кӗртрӗҫ. Иккӗмӗш тайм пӗтес умӗн динамовецсем те пӗр мечка тапса кӗртрӗҫ. Ҫапла вара вӑйӑ 1:1 шутпа пӗтрӗ.

Ӑмӑрту условийӗсем тӑрӑх, вӗсене татах 30 минут хушса пачӗҫ. Ҫак хушса панӑ вӑхӑтра та вӑйӑ результачӗ улшӑнмарӗ.

Ҫавӑнпа та вӗсем ӗнер тепӗр хут тӗл пулса выляреҫ: вӑйӑ 7:0 шутпа динамовецсем ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ.

* * *

Сӗнтӗрвӑрринче Шупашкарти «Спартак» спорт обществин пӗрремӗш командипе Сӗнтӗрвӑрри районӗн сборнӑй команди вылянӑ. Вӑйӑ 3:0 шутпа хӑнасем ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ — июнӗн 2-мӗшӗнче вырӑсла спектакль «Мачеха» (О. Бальзакӑн 4 пайлӑ драми). Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуҫланать.

КИНО

«РОДИНА»—июнӗн 2-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеанссенче «Александр Пархоменко», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуҫланакан сеанссенче музыкӑлла комеди «Кето и Котэ».

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

«Союзпечать» уйрӑмӗсенче, кашни почтӑра хаҫат ҫырӑнса илме пулать. Письмоносецсем гражданcен килӗсенче, хаҫат-журнал сарма уйӑрнӑ ҫынсем — фабрикӑсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсенче тата МТС-сенче хаҫат илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ.

ХАҪАТ ХАКӖ:
1 ҫулталӑка—52 тенкӗ те 20 пус;
6 уйӑха —26 тенкӗ те 10 пус;
3 уйӑха —13 тенкӗ те 0,5 пус;
1 уйӑха — 4 тенкӗ те 35 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-04, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01400 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.